Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Февраль
3
ЫТЛАРИКУН
№ 23 (8932)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).

Сталинград юсанса пырать. Ĕççынни депутачĕсен Сталинград хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ **С. И. Шапуров** каласа пани (1 стр.).

И. Афанасьев.—Республикăри колхозсенче йĕтĕнпе кантăр акса тăвас ĕçе малалла вăйлатассишĕн (3 стр.).

КОММУНИСТСЕМПЕ ПАРТИРЕ ТАМАННИСЕН СТАЛИНЛА БЛОКĔН КАНДИДАЧĔСЕМ (2 стр.).

ПАРТИЛЛĔ ĔÇ ЫЙТĂВĔСЕМ: **Ф. Прокофьев.** — Парти кадрĕсен квалификацине ӳстерес ĕç (2 стр.).

А. Алексеев. — Пĕрлехи пухусем—ĕççыннисен активлăхне ӳстермелли меслет (2 стр.).

Улатăр хула Совет исполкомĕн финанс пайне Хĕрлĕ ялав памалла тунă (3 стр.).

Б. Леонтьев.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).

Ливанри хаçат И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенине пичетлесе кăларнă (4 стр.).

Болгари халăх хуçалăхĕ 1952 çулта аталанни (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче (4 стр.).

Ĕççыннисене политика тĕлĕшĕнчен пысăк сыхăлăхла пулма воспитани памалла

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ коммунизм строительствинче çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тăвать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ, пирĕн халăхăн пĕтĕм тĕнчери историллĕ çĕнтерĕвĕсен итогне туса, Совет Союзĕ коммунизм çулĕпе малалла аталанмалли аслă программăна палăртрĕ. И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле ĕçĕн, вăл парти съездĕнче тухса каланă историллĕ сăмахĕн идейисемпе тата съезд решенийĕсемпе хавхаланнă совет çыннисем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн, Тăван çĕршывăн хăватне малалла ӳстерессишĕн творчествăллă пысăк çĕкленӳпе кĕрешеççĕ.

СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1952 çулта тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни, çавăн пекех союзлă республикăсем тăрăх плансене тултарни çинчен çак кунсенче пĕлтерни социализмлă стройăн аслă вăйне, вăл капитализмлă стройран калама çук малта тăнине тепĕр хут уççăн кăтартса параççĕ. Иртнĕ çул çавăн пекех халăх демократи çĕршывĕсем экономикăпа культурăна аталантарас тĕлĕшпе пысăк ӳсĕмсем тунипе паллă пулса тăрать.

Ирĕклĕ халăхсен çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçри ӳсĕмĕсем пĕтĕм тĕнчери пирĕн туссене савăнтараççĕ, капитал çĕршывĕсенчи миллионшар простой çынсен чĕрисене малашне лайăх пурнăç пулассине шанса тăмалли туйăм кӳреççĕ. Çав вăхăтрах пирĕн ӳсĕмсем империализм лагерьне питĕ хытă тарăхтараççĕ, пире тата та ытларах курайми тăваççĕ. Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хуçалăхпа культура строительствине вăйлатма кансĕрлес тесе, агрессиллĕ капитализм çĕршывĕсенчи вăрçă пуçарма хатĕрленекенсем нимĕнле ирсĕр ĕçсенчен те йĕрĕнсе тăмаççĕ.

Чи реакциллĕ вăй, жандарм пулса тăракан, халăхсен ирĕклĕхне пăчлантарма хăтланакан Америка империализмĕ агрессиллĕ блоксем тăвать, провокацисем организацилет, Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене ярас тесе пĕтĕм тĕнчипех сутăнчăксемпе çынвĕлеренсем тата диверсантсем шырать.

Болгарире, Венгрире, Чехословакире, Польшăра тата ытти халăх демократиллĕ çĕршывсенче тытнă шпионсемпе сăтăрçăсен иртнĕ çулсенче пулнă процесĕсем, ССР Союзĕнче врачсен маскипе витĕнсе пурăннă шпионсемпе çынвĕлеренсен ушкăнне тупса тытни—çаксем пурте тата ытти фактсем те акă мĕн кăтартса параççĕ: этем сăнне çухатнă çынсен преступникла ĕçĕсен йĕрĕсем Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тата Англие — империалистла разведкăсен штабне пырса кĕреççĕ. Долларсемпе стерлингсемшĕн ют çĕршывсенчи хăйсен хуçисене сутăннă çынвĕлерен-сутăнчăксене хавхалантаракансем шăп çавăнта пулаççĕ те ĕнтĕ.

Истори опычĕ çапла вĕрентет: пирĕн ӳсĕмсем кĕрешӳ сӳнсе ларасси патне мар, кĕрешӳ çивĕчленесси патне илсе пыраççĕ; эпир мĕн тери хăвăртраххăн малалла каятпăр — халăха хирĕç кĕрешекен, пĕтме пӳрнĕ тăшмансен кĕрешĕвĕ çавăн чухлĕ çивĕчленсе пырать, капитализмла йĕри-тавралăхăн пӳтсĕр агенчĕсен сăтăрла ĕçĕсен меслечĕсемпе майĕсем çавăн чухлĕ сĕмсĕртерех те йĕрĕнчĕкрех пулса пыраççĕ.

Социализм строительстви çĕнтерӳллĕн пынă вăхăтра класс кĕрешĕвĕ сӳнсе пырать текен оппортунистла, революцие хирĕçле «теорие» Сталин юлташ çапса хуçрĕ. Пирĕн çĕршывра социализм çĕнтернĕ, эксплуататорла классене тахçанах çапса çĕмĕрнĕ тата тĕп тунă. Анчах та буржуаллă идеологи юлашкийĕсем, харпăр хăйшĕн ытларах тăрăшас психологипе моралĕ çынсем, пурнăç çине буржуалла пăхакан тата буржуалла йăлапа пурăнакансем — чĕрĕ çынсем, пытанса пурăнакан халăх тăшманĕсем пирĕн патра пуррине манма юрамасть. Çав тăшмансене ССР Союзĕн тулăшĕнчи пирĕн тăшмансем тӳрремĕн пулăшса тăраççĕ.

«Класс кĕрешĕвĕ ССР Союзĕн чиккисем ăшĕнче кăна пулса пырать тесе шухăшлани,—кăтартса пачĕ Сталин юлташ 1937 çулта,—тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Класс кĕрешĕвĕн пĕр вĕçĕ ССР Союзĕн рамкисенче хăй ĕçне тăвать пулсан, унăн тепĕр вĕçĕ вара пирĕн тавра тăракан буржуаллă государствăсен çĕрĕсене тăсăлса кĕрет. Çĕмĕрсе тăкнă классен юлашкийĕсем çавна пĕлмесĕр тăма пултараймаççĕ. Шăпах çавăнпа, çавăн çинчен пĕлсе тăнă пирки ĕнтĕ. вĕсем малашне те пире хирĕç пуçăрланса хаярăн кĕрешсе пырĕç».

Эксплуататорла классене çĕмĕрсе тăкнă, совет обществин политикăллă-моралĕ пĕрлĕхĕ пулса тăнă хыççăн, ССР Союзĕшĕн класс кĕрешĕвĕн çивĕчлĕхĕ пĕтĕм тĕнчери аренăна куçнă, унăн çивĕчлĕхĕ пирĕн çине тăшманла пăхакан капитализмла йĕри-тавралăха хирĕç. Совет Союзĕ çине тапăнма сăлтав шыракан тавралăха хирĕç çаврăннă.

Совет халăхĕ фашистла агрессорсене çĕмĕрсе тăкрĕ, Тăван çĕршывăн чысĕпе ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕ. Анчах та капитализм тĕнчи империализмла çĕнĕ агресси тăвасси, пире сиен кӳресси, диверсипе шпионла ĕçсем тăвасси пĕтмен.

Империализмла государствăсем, пирĕн Тăван çĕршывăн хăвачĕпе оборонине хавшатас тесе, Совет Союзне сăтăрçăсемпе диверсантсем, çынвĕлеренсем ярса тăнă, малашне те ярĕç, хăйсен ирсĕр тĕллевĕсене пурнăçлама вĕсем ССР Союзĕнче те пире хирĕçле элементсене тата тăшманла çынсене шырĕç.

Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн политикăллă сыхăлăха мĕнпур майсемпе ӳстермелле, сăвара карса ларнине тата сыхлăхсăр пулнине хирĕç кĕрешмелле. Пирĕн çынсем сăвара карса ларнипе усă курса, тăшман мĕн май пур таран пур çĕрте те пире сăтăрлама пăхать,—çавна манма юрамасть.

«Правда Украины» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Украинăри Компартин Центральнăй Комитечĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ суту-илӳпе кооперации организацийĕсенче кадрсене суйласа илес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. Республикăн суту-илӳ, апат-çимĕç, çăмăл, аш-какайпа сĕт-çу промышленность министерствисен руководителĕсем кадрсене политикăллă тата ĕçлĕ пахалăхсем тăрăх суйласа илмелли парти принципĕсене хыттăн пăсса пынă. Çакна пула суту-илӳпе кооперацин хăшпĕр организацийĕсене тăшманла элементсем, вăрăсем, обществăллă пурлăха çаратакансем кĕрсе тулнă. Унти руководительсем сăвара карса ларни тата политикăллă сыхăлăха çухатни Совет государствине хакла ларчĕ.

Сыхăлăха çухатнине тата сăвара карса ларнине пула пулнă ĕçсем çинчен ытти вырăнсенчи хаçатсенче те çыраççĕ. «Советская Литва» хаçат республикăра космополитсене, литовецсемпе еврейсен буржуалла националисчĕсене тăрă шыв çине кăларни çинчен çырать; вĕсем, Америка империализмне сутăннă пӳтсĕрсем шпионла тата сăтăрла ĕçсем тунă.

Пирĕн аслă çулпуçăмăрсем Ленинпа Сталин совет çыннисене яланах сыхă пулма кирли çинчен, капитализмла йĕри-тавралăх çинчен пĕр минутлăха та манма юраманни çинчен вĕрентеççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет государстви мир политикине, вăрçа сирсе ямалли тата халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетмелли политикăна çирĕппĕн тата пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыраççĕ. Анчах та эпир империалистла вăрçă чĕртекенсем çĕнĕ агресси тăвас хăрушлăх пуррине шута илмесĕр тăма пултараймастпăр. Советлă Тăван çĕршывăн оборонине, пирĕн государствăн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе разведка органĕсене çирĕплетсе пымалла.

Рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин сыхăлăхне ӳстерес тĕлĕшпе идеологиллĕ ĕç, ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас ĕç пысăк вырăн йышăнать. Парти пире коммунистсемпе мĕнпур ĕççыннисене Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн парăнса ĕçлеме, Совет государствин оборонине куллен тĕреклетсе пыма, политика тĕлĕшĕнчен сыхă пулма воспитани пама вĕрентет. Идеологи ĕçне вăйсăрлатни пирĕн çине тăшманла пăхассине, пире хирĕçле шухăшсене аталанма услови туса пани пулать.

Ĕççыннисене воспитани парас ĕçĕн никĕсĕ — марксизм-ленинизм, вăл — пĕтĕм халăхсемшĕн ирĕклĕхпе телейлĕх тупмалли çула çутатса пыракан революциллĕ вĕрентӳ пулса тăрать. Марксизм-ленинизм класс кĕрешĕвĕн законĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантарать, тăшман кирек мĕнле тумтирпе витĕнсен те ăна курса тăрă шыв çине кăларма вĕрентет. Массăсем хушшинче марксизм-ленинизм идейисене сарассине, пирĕн кадрсен политикăллă шайне ӳстерес ĕçе парти пĕрремĕш вырăна хурса хаклать. Государствăпа парти ĕçĕн кирек хăш отраслĕсенче ĕçлекен работниксен марксистла-ленинла ăнланăвĕ мĕн тери пысăкрах, вĕсен ĕçĕ те çавăн чухлĕ лайăхрах та тухăçлăрах пулса пырать. Идейăпа политикăллă ĕçĕн витĕмлĕхне, пирĕн пропагандăпа агитацие, пичет ĕçне коммунистсен идеологиллĕ ăстăнлăхне ӳстерес, рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин политикăллă сыхăлăхне вăйлатас тĕллевпе туса пымалла.

Задача çакăн пек: пирĕн ĕçе сиенлĕхпе хăрушлăх кӳрекен шухăша—хăйне хăй кăмăлланса е тĕлсĕр савăнса ларассине, каппаассине тата тимсĕр пулнине пĕтермелле, хамăрăн ĕçри çитменлĕхсене хăюллăн та татăклăн уçса палăртмалла тата пĕтерсе пымалла, аялтан килекен критикăпа самокритикăна анлăн сармалла.

(«ПРАВДА» хаçатăн 1953 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчи умстатьинчен).

Совет Союзĕ тăрăх

☆

Историллĕ кун

Сталинград районĕнче нимĕççен фашистла çарĕсене аркатса тăкнăранпа вунă çул тултарнине совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем анлăн паллă тăваççĕ. Хуласемпе ялсенче, çар чаçĕсенче Сталинград патĕнчи аслă çапăçу çинчен докладсемпе лекцисем ирттереççĕ.

Çак кунсенче Совет Çарĕн Центральнăй музейне курма пыракансем уйрăмах нумай.

Экскурсантсем музейри документсемпе интересленсе паллашаççĕ. Çав документсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, аслă çулпуçăмăрсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин Тăван çĕршывăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене туса хурас тата тĕреклетсе пырас ĕçе ертсе пыни çинчен каласа параççĕ.

Музейри экспонатсем Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçин чаплă тапхăрĕсене кăтартса параççĕ. Совет Çарĕ Сталинград районĕнче çĕнтерӳ тунине кăтартса паракан экспонатсене пурте интересленсе пăхаççĕ.

Пĕр зал варринче, çӳлĕ постамент çинче Бодо-Д № 233 телеграф аппарачĕ ларать. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çак аппарат Верховнăй Главнокомандующи Ставкинче пулнă. Çак аппарат тăрăх И. В. Сталин юлташ фронтсемпе тата армисемпе çыхăну тытнă.

Музейăн икĕ залĕнче питĕ нумай документсем, И. В. Сталинăн «Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки, Сталинград патĕнче тăшмана хирĕç çапăçнă полксемпе дивизисен ялавĕсем, Сталинград патĕнче нимĕççен фашистла çарĕсене аркатса тăкнине кăтартакан карттă пур. Музейра 4.940 номерлĕ тупă пур, çак тупăпа артиллеристсем Атăлтан пуçласа Висла патне çитиччен (6.940 километр хушши) тăшмана хирĕç çапăçнă. Çак тупăран персе 1.200 гитлеровеца тата тăшманăн боевой техникине нумай пĕтернĕ. Юлашки кунсенче музее илсе пынă фотоӳкерчĕк çинче ĕмĕр манмалла мар паттăр ĕç тунă 33 бронебойщика кăтартнă. Вĕсем 1942 çулхи августăн 24-мĕшĕнче Сталинград çывăхĕнче, нимĕççен 70 танкĕн атакине сирсе ярса, тăшманăн 27 машинине тата 150 гитлеровеца пĕтернĕ. Совет Çарĕн воинĕсем çав çапăçура çухатусем тӳсмен.

Музейри экспонатсем совет воинĕсен паттăр ĕçĕсене аса илтереççĕ, пирĕн мухтавлă çар Сталинград патĕнче аслă çĕнтерӳ тунине кăтартса параççĕ. (ТАСС).



Тахиа-Таш. 1952 çулта Тахиа-Таш гидроузелне кĕрекен канала чавма пуçланă. Çав канал тăрăх çитес çуркунне çĕр чавмалли снарядсем Туркменири тĕп канал çырмине чавмалла вырăна пыраççĕ. Халĕ канал чавнă çĕрте скреперсем, бульдозерсем, экскаваторсем ĕçлеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Уралец» экскаватор ĕçре.

О. КУЗЬМИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Сталинградри савăнăçлă лару

СТАЛИНГРАД, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Хулари тата облаçри ĕççыннисем Сталинград патĕнче нимĕççен фашистла çарĕсене аркатса тăкнăранпа вунă çул çитнине анлăн паллă тăваççĕ. Предприятисемпе учрежденисенче Сталинград патĕнчи çапăçу çинчен лекцисемпе докладсем нумай туса панă.

Çак кунсенче герой-хулари историллĕ вырăнсенче пиншер ĕççыннисем пырса кураççĕ. Промышленность предприятийĕсенче, строительство организацийĕсенче, транспортра ĕçлекен нумай бригадăсем чаплă куна производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илнĕ.

Паян Сталинград патĕнче историллĕ çĕнтерӳ тунăранпа 10 çул çитнĕ ятпа А. М. Горький ячĕпе тăракан драма театрĕн çуртĕнче ĕççынни депутачĕсен Сталинград хула Совечĕн савăнăçлă ларăвĕ пулнă. Савăнăçлă ларăва парти, комсомол, профсоюз тата ытти обществăллă организацисен представителĕсемпе пĕрле ирттернĕ.

Савăнăçлă ларура пулнисем питĕ пысăк çĕкленӳпе хисеплĕ президиума КПСС Центральнăй Комитечĕн аслă Сталин ертсе пыракан Президиумне суйланă.

Сталинград патĕнче нимĕççен фашистла çарĕсене аркатса тăкнăранпа вунă çул çитни çинчен партин Сталинград обкомĕн секретарĕ Гришин юлташ доклад тунă.

Совет халăхне никам та çĕнтерме пултарайманнине кăтартса тăракан Сталинград хули, тенĕ Гришин юлташ, юсанса пырать, вăл пурăнать тата малалла аталанать. Вăрçă хыççăнхи çулсенче хулара строительство ĕçĕ анлăн сарăлнă. Герой-хула коммунизмăн аслă стройкисен центрĕ, çутçанталăка улăштарса çĕнетес тĕлĕшпе туса пыракан питĕ пысăк ĕçсен центрĕ, индустриллĕ тата культурăллă пысăк центр пулса тăнă. Малашне хула тата пысăкраххăн ӳссе пымалла.

Савăнăçлă ларура пулнисем питĕ пысăк хавасланăхпа Сталинград патĕнчи çĕнтерĕве организациленĕ, халăхсен аслă çулпуçĕпе учителĕ И. В. Сталин юлташ патне салам яма йышăннă.

☆

Çĕнĕ çулăн малтанхи уйăхĕнче

ЛЕНИНГРАД, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Хулари тата облаçри вуншар предприятисем çĕнĕ çулăн малтанхи уйăхĕнче коммунизмăн аслă стройкисен хисеплĕ заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Январĕн 31-мĕшĕнче «Главстроймашăн» строительство машинисем тăвакан заводĕнчен Каховкăна бетон хывнă чухне ĕçлемелли пысăк установка ярса панă. Иртнĕ уйăхра çак предприяти коллективĕ «Куйбышевгидростройри» строительсем патне арматура тимĕрне кукăртмалли хăватлă икĕ механизм ăсатнă.

Çĕнĕ çул пуçланнăранпа С. М. Киров ячĕпе тăракан «Электросила» заводри рабочисемпе инженерсем пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхри пысăк стройка пулса тăракан Мингечаур гидроэлектростанцийĕ валли хăватлă гидрогенератор туса хатĕрленĕ. Сталин ячĕпе тăракан заводри металлургсем тепĕр стройка валли хăвăрт ĕçлекен гидротурбина тунă. Свердлов ячĕпе тăракан заводри станкостроительсем питĕ пысăк станок тунă. Çав станокпа ĕçлесе Куйбышеври гидроэлектростанци валли хатĕрлекен гидротурбинăсен пайĕсене тумалла. Вĕсем Куйбышев гидроэлектростанцинче вырнаçтарса лартмалли тĕнчери чи пысăк гидротурбинăсен пайĕсем пулаççĕ.

ЯКУТИРЕ ÇĔРĔÇ КУЛЬТУРИ ӲСЕТ

ЯКУТСК, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Якут АССР Министрĕсен Совечĕ республикăри колхозсемпе МТС-сем çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен сӳтсе явнă.

Якутири колхозсем, кунта çанталăк условийĕсем йывăр пулин те, çĕрĕç культурине ӳстерсех пыраççĕ. Ялхуçалăх артелĕсем малта пыракан агротехникăна ĕçе кĕртеççĕ. Вĕсем кунти вырăншăн çĕнĕ ĕç пуçарнă—уйра куăксем акма тытăннă. Куăксем акмалли пусă çаврăнăшĕсем 87 колхозра тунă. Ирхи çĕртме тата хура çĕртме тăвасси чылай ӳснĕ. Тырăсене хĕреслĕ майпа, вăрлăха яровизацилесе тата сывлăшпа ăшăтса акаççĕ.

Çуркуннехи шывпа 40 пин гектар çĕре шăвармалла тунă. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра ку ĕçе тата ытларах ӳстереççĕ. 90 колхозра вуншар плотина, çĕре яхăн пĕве тунă. Колхозсем çĕре шăвармалли сооруженисем туса лартма проектсем хатĕрлеççĕ.

Сталинград юсанса пырать

Ĕççынни депутачĕсен Сталинград хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ С. И. Шапуров каласа пани

Сталинград патĕнче нимĕççен фашистла çарĕсене аркатса тăкнăранпа февралĕн 2-мĕшĕнче вунă çул тултарчĕ.

Сталинград патĕнчи çапăçу вăрçăсен историйĕнчи чи пысăк çапăçу пулнă. Кунта совет воинĕсем, чи аслă полководец Сталин юлташ хатĕрленĕ план тăрăх гитлеровецсен 300 пин çынлă çарне хупăрласа илнĕ тата аркатса тăкнă, çапла иккĕмĕш тĕнче вăрçинче улшăну пуçласа янă.

«Сталинград, — тесе кăтартса панă Сталин юлташ,— нимĕççен фашистла çарĕн кун-çулĕ пĕтсе ларасси çывхарни пулса тăчĕ. Çакă паллă, Сталинград патĕнчи çапăçусем хыççăн нимĕççем текех ураланаймарĕç».

Çавăнпа ĕнтĕ Сталинград патĕнчи çапăçу пĕтĕм тĕнчипе питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Вăрçă вăхăтĕнче Сталинград хулине пĕтĕмпех ишĕлтерсе хăварнă. Хулари промышленность предприятийĕсене, центрти тата хулан çурçĕр енчи пайĕнче пурăнмалли çуртсене пĕтĕмпех ишĕлтерсе тăкнă. Ют çĕршывсенче «Сталинград хулине текех юсама май çук, вăл яланлăхах пĕтсе ларнă, тесе калаçакансем сахал мар пулнă. Советлă Тăван çĕршывăн патриочĕсем Сталинграда юсаса çитерме шут тытрĕç.

Сталинград хулине юсама çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен пиншер çамрăксем килчĕç. Правительство йышăннипе кунта пысăк строительство организацийĕсем вуншар туса хунă, вĕсене хамăр çĕршывра туса хатĕрленĕ хăватлă техника панă. Хĕвеланăç еннелле куçса пынă вăрçă сасси илтĕннĕ вăхăтрах хулара строительство сарăлса пынă. Чи малтан промышленность предприятийĕсене — трактор заводне, «Красный Октябрь» ятлă металлурги заводне тата ыттисене те юсама тытăннă, çĕнĕ предприятисем лартма пуçланă. Çав вăхăтрах пурăнмалли çуртсем тунă, культурăпа йăла çурчĕсене ĕçе кĕртсе пынă.

Сталинград хулине юсама тытăннă малтанхи кунсенчех, ача садĕнче ĕçлекен Александра Черкасова пуçарнипе, патриотла юхăм — доброволец-строительсем строительство организацийĕсен коллективĕсене пулăшасси сарăлса кайнă. Рабочисемпе служащисем, бригадăсене организациленсе, хăйсен ĕçĕнчен пушă вăхăтра урамсемпе площадьсене, строительство площадкисене тухнă, çурт ишĕлчĕкĕсен куписене тасатма пулăшнă, строительство материалĕсем илсе пырса панă, строительство объекчĕсене шефа илнĕ, урамсенче йывăççем лартнă, çĕнĕ садсемпе скверсем тунă.

Вилнĕ борецсен ячĕпе тăракан площадьре Сталинград çыннисем аслă Сталина хĕрӳллĕ сăмахсемпе тупа туса каланăранпа вунă çул иртрĕ. Сталинградри ĕççыннисем, пĕтĕм çĕршывпа пĕрле чаплă куна уявласа, мирлĕ ĕçре халиччен мĕн тунисене пăхса тухаççĕ. Хулана юсас тĕлĕшпе çак иртнĕ тапхăрта чаплă ĕçсем пайтах тунă.

Герой-хула коммунизмăн икĕ аслă стройкин центрĕ пулса тăчĕ. Кунпа пĕрлех вăл çĕршывăн кăнтăр-хĕвелтухăç енче çутçанталăка улăштарас тĕлĕшпе тăвакан пысăк ĕçсен центрĕ пулса тăрать. Атăлпа Дон хушшинче, нимĕççен фашистла захватчикĕсене хупăрласа илнĕ унка пĕрлешсе çитнĕ вырăнта, Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан суднăсем çӳремелли канал тунă. Вăл пилĕк тинĕсе çыхăнтаракан çулсене пĕрлештерчĕ,—вырăс халăхĕн ĕмĕрхи ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Хуларан çурçĕр енче, гитлеровецсене хирĕç хаяр çапăçусем пулнă вырăнта, Сталинград гидроэлектростанцине тăваççĕ. Атăлпа Дон хушшинчи канал тата Сталинград гидроэлектростанцийĕ пулăшнипе пилĕк облаçри 15 миллион гектар çĕре шăварса тăмалла пулать. Сталинград облаçĕ урлă государствăн вăрман тăрăхĕсем иртеççĕ, кунта промышленность валли юман вăрман лартса ӳстереççĕ.

Сталинград Атăл çыранĕсем тăрăх 70 километр тăршшĕ яхăн сарăлса ларать. Вăл—çĕршыври питĕ пысăк стройка. Унăн промышленноçĕ, вăрçă умĕнхипе танлаштарсан, чылай ытларах продукци туса кăларать. Çĕнĕ йышши продукци туса кăларма тытăннă. Пĕтĕм Союзăн ĕçлесе тăракан çĕнĕ предприятисем лартаççĕ. Хулара строительство материалĕсем тăвакан пысăк промышленность ӳссе пырать. Сталинград коммунизмăн аслă стройкисене хăватлă земснарядсем туса пачĕ, тракторсемпе экскаваторсем, паха хурçă парса тăрать, нефть промышленноçне оборудовани туса парать, баржăсем, вырăнта пухса лартмалли çуртсем тата ытти нумай тĕрлĕ продукци туса кăларать. Сталинградри судостроительсем Пысăк Атăл валли тата Атăлпа Дон хушшинчи канал валли пассажирсем лартса çӳремелли хăватлă, питĕ лайăх теплоходсем тăваççĕ.

Хула Совечĕ Сталинградра пурăнакансем валли пурăнмалли çуртсем, культурăпа йăла тĕлĕшпе лайăх условисем туса пама тăрăшать. Иртнĕ çулсенче Сталинградра пурăнмалли çуртсем икĕ миллион тăваткал метр ытла туса лартнă. Çĕршер шкул, больницăсем, ача сачĕсем, ача яслисем туса ĕçе янă, лайăх магазинсем нумай уçнă, автоматикăллă телефон туса ĕçе кĕртнĕ, трамвай, чугун çул тата автобус линийĕсем ĕçлеççĕ, водопровод тата канализаци тунă.

Сталинград хули—культурăллă центр. Кунта 12 аслă шкул тата техникумсем, 8 театр, 32 клуб, 11 культура çурчĕ, парксемпе стадионсем, техника çурчĕсем 3 тата ытти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта облаçри М. Горький ячĕпе тăракан драма театрĕ ĕçлеме пуçларĕ, театр валли лайăх çурт туса лартнă. Çавăн пекех Атăл хĕррине лайăх илемлетнĕ. Ворошиловски районра тата Дар-горара кинотеатрсем ĕçлеме пуçланă. Халĕ ĕç дворецĕн, чугун çул вокзалĕн, тĕп гостиницăн, планетарин, «Красный Октябрь» заводăн культура дворецĕн тата ытти нумай учрежденисен çурчĕсене, çав вăхăтрах вуншар пурăнмалли çуртсем тăваççĕ.

Сталинград хулине çĕнĕ план тăрăх тăваççĕ, пĕрре тытăнсан урамсене тата кварталсене пĕтĕмпех туса пĕтереççĕ. Сталин ячĕпе тăракан проспект хулари тĕп урам пулать, кунта чи пысăк тата хитре çуртсем лартаççĕ. Трактор завочĕ патĕнчен пуçласа «Красный Октябрь» завод поселокĕ патне çитиччен, çавăн пекех Сталински тата Ворошиловски районсенче нумай хутлă çуртсем лартса тухнă.

Хула хуçалăхне юсас, хулана илемлетес, халăх валли лайăх условисем туса парас ĕçре хула Совет исполкомне яланхи комиссисем нумай пулăшаççĕ. Сывлăха сыхлас, коммунальнăй хуçалăхпа йăла тĕлĕшпе ĕçлекен, культура, строительство тата ытти комиссисем лайăх ĕçлеççĕ.

Халĕ, вырăнти Советсене суйлама хатĕрленнĕ май, Сталинград хулинче хула Советне суйламалли 32 çĕнĕ суйлав округĕ тунă. Çак округсем хулара халăх йышĕ ӳссе пынă май хушăннă.

Хула Совечĕ умĕнче партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисенчен тухса тăракан питĕ пысăк задачăсем тăраççĕ. Пиллĕкмĕш сталинла пилĕк çуллăх план тăрăх хулара строительство анлăн сарăлса пырать. Çĕнĕ промышленность предприятийĕсемсĕр пуçне, çывăх вăхăтра пĕр миллион тăваткал метра яхăн пурăнмалли çуртсем, Советсен çуртне, Царицын-Сталинград оборонин И. В. Сталин ячĕпе тăракан музей çуртне, сыхăну çуртне, виçĕ гостиница туса лартма палăртнă. Хулана çĕнĕ чугун çул вокзалĕ тата шыв вокзалĕ, пионерсен çурчĕ, икĕ библиотека çурчĕ, çĕнĕ культура çурчĕсем, педагогика, медицина, механически тата ялхуçалăх институчĕсен çурчĕсем, пичет çурчĕ илемлетсе тăрĕç. Хулара тата 10 кинотеатр, 38 шкул, сывлăх учрежденийĕсем 30, ача сачĕсемпе яслисем 86 туса лартмалла. Сталинград çыннисем валли троллейбус линийĕ пулать, Сталински тата Ворошиловски районсене çыхăнтарма Пионерка ятлă юханшыв урлă пысăк кĕпер хывмалла.

Çак пилĕкçуллăхра строительство организацийĕсен производствăллă-техникăллă никĕсĕ вăйланать, ĕçе механизацилесси нумай ӳсет. Хулари строительство площадкисенче вуншар крансемпе, штукатурка тумалли çĕр ытла машинăпа, çĕршер экскаваторсемпе, автомобильсемпе, транспортерсемпе, бетон çармалли машинăсемпе тата ытти механизмсемпе ĕçлеççĕ. 1955 çул тĕлне стройкăсем хăватлă техникăна хĕçпăшалланса çитеççĕ, вара вĕсем çулталăк хушшинче пурăнмалли çуртсем 250 пин тăваткал метртан кая мар туса лартма пултарĕç.

Сталинградри ĕççыннисем, пиллĕкмĕш сталинла пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту сарса, ĕмĕрлĕхе чапа тухнă хулана юсас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕç.

Сталинград, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС).

Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Ывăнма пĕлмен учитель

Ядрино ялĕнче 76 çулхи учитель Василий Михайлович Пономарев пурăнать. Вăл учитель пулса 55 çул хушши ĕçлет. Ывăнма пĕлмен учитель нумай ачасене вĕрентсе ÿстернĕ. Çак шкултан вĕренсе тухнисем Тăван çĕршыври тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем гражданла вăрçă тата Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршывăн чысĕпе мухтавĕшĕн, унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн çапăçнă. Халĕ, мирлĕ строительство çулĕсенче, Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн, унăн хăвачĕпе тĕрекне ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче — инженерсемпе техниксем, учительсемпе врачсем, агрономсемпе механизаторсем, искусство работникĕсем, Совет Çарĕн офицерĕсем, партипе совет работникĕсем.

Çак шкултан вĕренсе тухнă И. Яланкин—врач. А. Николаев—çар академине пĕтернĕ, вăл çар инженерĕ пулса ĕçлет. Ф. Трофимов та çар академине пĕтерсе авиаци полковникĕ пулса тăнă. В. М. Пономарев вĕрентсе çитĕнтернĕ А. Миронов, И. Никитин, З. Иванова, Г. Волков юлташсем халĕ унпа пĕрле, пĕр шкулта, учительсем пулса ĕçлеççĕ.

В. М. Пономарев юлташ, ватă пулин те, пĕтĕм вăйне шкул ĕçне, çамрăксене çулăмлă патриотсем, социализмлă Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсем пулма вĕрентсе ÿстерме парать. Вăл нумай çул хушши пухнă опытпа çамрăк учительсене паллаштарать.

В. М. Пономарев учитель — активлă общественник. Революци çулĕсенче вăл ялта Совет влаçĕ тăвассишĕн тăрăшса ĕçленĕ. Халĕ партипе правительство колхоз хресченĕсем умне кăларса тăратнă задачăсене ăнлантарса парать, çак задачăсене пурнăçлама колхозниксене хавхалантарать, ялта культурăллă пысăк ĕçсем туса пырать.

Партипе правительство В. М. Пономарев юлташ ĕçне пысăка хурса хакларĕç. Шкулта нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна Ленин орденĕ парса наградăланă, Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ ятне панă.

Суйлав умĕнхи пухура Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем В. М. Пономарев юлташа каллех район Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Н. ЦВЕТКОВ.

Етĕрне районĕ.

Тăрăм суйлав округĕнче

ЕЛЧĔК. «Вперед» колхоз фермисенче ĕçлекенсем çĕнĕ пилĕкçуллăхра общественнăй вылăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне малалла ÿстерсе пырассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем иртнĕ çулта аслă Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕç, кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 1.200-шер литр сĕт суса илчĕç.

Социализмлă ăмăртура Л. Трофимова юлташ малта пычĕ. Вăл хăйне çирĕплетсе панă вунă ĕнерен кашниченех 1.700-шер литр сĕт суса илчĕ тата 11 пăру илсе пăхса пачĕ.

Тăрăшса ĕçлекен тата вĕренсе ÿссе пыракан паллă дояркăна Трофимова юлташа колхозниксем юратаççĕ, хастарлă ĕçленĕшĕн мухтаççĕ.

Суйлав умĕнхи пухура 23-мĕш номерлĕ Тăрăм округĕ тăрăх район Советне депутата суйлама «Вперед» колхоз членĕсем, пĕр кăмăллă пулса, Лидия Егоровна Трофимова юлташăн кандидатурине тăратма йышăнчĕç.

И. НАУМОВ.
В. ДОЛГОВ.

Шанăçа тивĕçлĕ кандидат

Канаш районĕнчи «Соревнование» колхоз членĕсем ĕçсынни депутачĕсен район Советне депутата суйлама Анастасия Захаровна Захарова юлташа кандидата тăратрĕç.

Захарова юлташ 1919 çулта Канаш районĕнчи Вăрăмпуç ялĕнче çуралнă.

Пĕррехинче вăл МТС-ран килнĕ агрономпа тĕл пулса калаçать.

— Хĕрарăмсем тракторпа ĕçлеме пултараççĕ-и?—кăшт вăтаннă пек пулса, хăюсăррăн ыйтнă вăл унтан.

— Пултараççĕ. Пирĕн МТС-ра та хĕрарăм-трактористсем пур. Аван ĕçлеççĕ,—ăнлантарнă агроном.—Санăн вĕренес килет-и?

— Вĕренес килет çав. Трактор вĕт... Мĕн тери пысăк вăй унта...

— Питĕ лайăх. Кăçалах вырнаçтарăпăр сана,—çамрăк хĕрĕн шухăшне ырланă агроном.

Анастасия Захаровна 1939 çулта колхозсем валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлекен Канашри шкула, трактористсен курсне, вĕренме кĕнĕ. Тепĕр çулах вăра, çуракинчен пуçласа, Канаш МТС-ĕнче ĕçлеме тытăннă.

Вăл чунтан-чĕререн юратса ĕçленĕ. Ĕçленĕ хушăра та пĕрмаях вĕреннĕ, ăсталăхне ÿстерсе пынă.

Тракторпа тумалли ĕçсен заданийĕсене яланах ирттерсе тултарса пынине тата пур ĕçе те хăвăрт та тĕплĕн тума тăрăшнине кура, ăна часах трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçлеме хушаççĕ. Захарова юлташ 1944 çултан пуçласа паян кунччен Канаш МТС-ĕнчи 12-мĕш трактор бригадине ертсе пырать.

Захарова юлташ ĕçлеме пуçланăранпа бригада тракторпа тумалли ĕçсен планне çулсеренех ирттерсе тултарать. Хастарлă та пултаруллă ĕçшĕн ăна 1945 çулта «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе, 1946 çулта «1941—1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн» медальпе наградăланă.

Сталин юлташ умĕнче илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн кĕрешсе, бригадăри механизаторсем пуян та хăватлă техникăпа тĕрĕс усă курма тăрăшаççĕ. Вĕсем 1952 çулта 3.223 гектар вырăнне 4.217 гектар çĕр ĕçĕ тунă, 1.105 килограмм горючи перекетленĕ.

Анастасия Захаровна çамрăк механизаторсене яланах пулăшать, вĕрентет, хăйĕн ĕçри опычĕсемпе паллаштарать. Çавăнпа пĕрлех вăл—активлă общественница, 1944 çултан пуçласа паян кунччен КПСС Канаш райкомĕн членĕ.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче пулнă республикăри механизаторсен канашлăвĕ Чăваш АССР-ĕнчи машина-трактор станцийĕсенче ĕçлекен работниксене 1953 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă ирттерессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине бригадăри механизаторсем, пĕтĕм МТС коллективĕпе пĕрле, хĕруллĕн сÿтсе яврĕç, çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Халĕ бригада членĕсем хĕрсех тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене юсаççĕ. Вĕсем хăйсем илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырассишĕн ырми-канми кĕрешеççĕ.

Анастасия Захаровна Захарова юлташа вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕнче те район Советне депутата суйланă. Вăл халăх шанăçне тÿррĕн пурнăçласа пычĕ.

Ст. АСЛАН.

Колхоз ĕçченĕсем

КАНАШ. Вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕнче Усырма ялĕнче ял Советне суйламалли 18 округ пулнă. Кăçал вара ялта 19 округ тунă. Иртнĕ суйлав пулнăранпа ял сăн-сăпачĕ нумай çĕнелсе улшăнчĕ. Пĕрлешсе пысăкланнă колхоз тĕрекленсе пычĕ. Колхоз юлашки çулсенче тырпул тухăçлăхне чылай ÿстерчĕ. Çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх шучĕпе унăн тухăçлăхĕ те чылай ÿсрĕ.

Колхозлă ялти ĕçсыннисем, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, вырăнти Советсене депутата суйлама колхоз хресченĕсен, ялти интеллигенцин малта пыракан представителĕсене, ĕçре палăрнă çынсене кандидата тăратрĕç.

Усырма ял Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче—колхоз бригадирĕсем, вылăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем, уй-хир бригадисенчи колхозниксемпе колхозницăсем пур.

А. Григорьева юлташа ял Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Вăл иртнĕ çултанпа вылăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ пулса ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче фермăра нумай улшăнусем пулчĕç, колхоз вылăх-чĕрлĕх йышне тата тухăçлăхне икĕ хута яхăн ÿстерчĕ. Вакă колхозсем пĕрлешсе пысăкланиччен вăтам шутпа кашни ĕнерен 400—500 литртан ытла мар сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал вара 1.200 литра яхăн, чылай дояркăсем 1.400 литр ытла сĕт суса илчĕç.

Колхозра вылăхсем валли çĕнĕ ăшă витесем лартнă. Фермăри йывăр ĕçсене механизацилесе пыраççĕ. Унта ĕçлекенсен пурнăç условийĕ кунтан-кун лайăхланса пырать. Кăçал вĕсем валли пурăнмалли çĕнĕ пÿрт лартнă, унта радиоприемник пур.

А. Григорьев юлташ фермăри учетпа отчет ĕçне те лайăх йĕркеленĕ.

Г. Петров юлташ колхозра бригадир пулса ĕçлет. Вăл—Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, хастарлă та пултаруллă бригадир. Кăçал вăл тухăçлă кантăр туса илсе, районти выставкăна хутшăнма тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл—ялти активлă общественник, суйлавçăсем панă наказсене пурнăçлама яланах тăрăшать, суйлавçăсемпе тĕл пулса калаçать, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе ял Совет сессийĕнче тата ытти çĕрте те çĕнĕ ыйтусем хускатать. Ял Советĕнче ялан ĕçлекен ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ пулса ĕçлесе, колхоза кулленех пулăшса пырать.

Вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕнче ял Советне тăватă хĕрарăма депутата суйланă пулнă. Кăçал вара ял Советне депутата суйлама улттă хĕрарăма кандидата тăратнă. Кандидата тăратнисем хушшинче—ĕçчен хĕрарăмсем З. Гладкова, Е. Никифорова юлташсем пур.

З. Гладкова çамрăк мар ĕнтĕ. Вăл хăйĕн ачисене пурне те вĕрентсе кăларчĕ. Халĕ унăн виçĕ ачи—Совет Çарĕнче, аслă ывăлĕ Григорий—Совет Çарĕн офицерĕ.

Ял Советне депутата суйлама кандидата тăратнă çынсем хушшинче колхоз председателĕ З. Степанов, колхоз председателĕн заместителĕ, вăлах пуçламăш парторганизаци секретарĕ М. Кузнецов, хурт-хăмăр ăстаçи С. Львов, бригадирсем П. Николаев, Н. Андреев, колхозри ревизи комиссийĕн председателĕ К. Егорова, колхозри строительство бригадин бригадирĕ В. Кузнецов тата ытти колхозниксем те пур.

А. СОКОЛОВА.

Халăхшăн тăрăшакансем

ИШЛЕЙ. Çĕнъял Покровски ял Советне депутата суйлама 11 çынна кандидата тăратрĕç. Вĕсем хушшинче темиçе çул хушши «За коммунизм» колхоз садовочĕ пулса ĕçлекен Василий Федорович Кириллов юлташа куратпăр. Кириллов юлташ колхоза организаципе хуçалăх енчен тĕреклетессишĕн хытă тăрăшать. 1952 çулта колхоз садран тата пахча çимĕçрен 60 пин тенке яхăн тупăш илнĕ.

Ял Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Михаил Степанович Степанов—«За коммунизм» колхоз председателĕ. Ăна район Советне депутата суйлама та кандидата тăратнă. Вăл колхоза вăйлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлет.

Ял Советне депутата суйламалли кандидат Василий Якимович Леонтьев юлташ Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хастарлă кĕрешнĕ. Совет правительстви ăна икĕ хутчен Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата икĕ медальпе наградăланă. Çартан таврăннă хыççăн, Леонтьев юлташ çĕршыв хуçалăхне малалла аталантарса пырассишĕн кĕрешекенсен ретне тăнă. Вăл 1950 çултанпа Çĕнъял Покровски ял Совечĕн председателĕ пулса ĕçлет.

Мария Петровна Кожевниковăна ял Советĕнчи ĕçсыннисем пурте пĕлеççĕ. Вăл 1947 çултанпа ял Совет исполкомĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Ăна хальхи суйлавра та депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Кронид Петрович Верендеев юлташăн ĕçĕ мухтава тивĕçлĕ. Вăл чылай çулсем хушши халăха вĕрентес ĕçре пархатарлă ĕçлет. К. П. Верендеев юлташ тăрăшнипе Çĕнъял Покровскинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул кăтартуллă ĕçлекен шкулсенчен пĕри пулса тăчĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Пĕр шухăш-кăмăлпа

КУКЕÇ. Патирекри Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ пулчĕ. Пухура чи малтан колхозри пуçламăш комсомол организацин секретарĕ Виктор Андреев сăмах илчĕ.

— Эпĕ ĕçсынни депутачĕсен Кÿкеç ял Советне депутата суйлама колхозри чи хастарлă çамрăка Зоя Филиппова юлташа кандидата тăратма сĕнетĕп, — терĕ вăл.

Унăн кандидатурине пурте ырласа йышăнчĕç.

Зоя Филиппова—колхозри пултаруллă çамрăксенчен пĕри, пур ĕçе те активлă хутшăнать. Вăл вăрман хатĕрлевĕнче те паха тĕслĕх кăтартса ĕçлерĕ. Йывăç касас, йывăç турттарас ĕçре кулленхи нормăна 125—130 процент таран тултарса пычĕ. Иртнĕ çулта 300 ĕçкунĕ ытла тунă.

Пуху ял Советне депутата суйлама кандидата тăратма сĕннĕ ытти çынсен—Степан Ярков колхозникăн, Анна Демидова медсестран кандидатурисене те ырласа йышăнчĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та суйлав умĕнхи пуху пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Кунта ĕçсынни депутачĕсен Сарапакасси ял Советне депутата суйлама çыхăну уйрăмĕнче ĕçлекен почтальона Юлия Федорова юлташа, Çатра Хочахматри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне Василий Андреевич Андреев юлташа кандидата тăратнă.

А. ТИМОФЕЕВ.
Ф. МАРКОВ.

Пĕрлехи пухусем— ĕçсыннисен активлăхне ÿстермелли меслет

Ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре рабочисемпе служащисен пĕрлехи пухăвĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ĕçсыннисен пĕрлехи пухăвĕсенче политика, хуçалăх тата культура строительстви çинчен, производствăна лайăхлатасси, государство заданийĕсене ăнăçлă пурнăçласа пырасси çинчен сÿтсе яваççĕ.

Пухусенче ĕçсыннисем хуçалăхпа профсоюз организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене, усă курман резервсене палăртаççĕ, производствăна çĕнетсе лайăхлатмалли паха сĕнÿсем параççĕ. Пухăва активлă хутшăнни ĕçсыннисен тавракурăмне, ĕçри ответлăхне ÿстерет.

Республикăри нумай предприятисемпе организацисенче рабочисемпе служащисен пухăвĕсене тĕплĕн хатĕрленсе ирттереççĕ, унта производствăна лайăхлатасси, социализмлă ăмăртăва вăйлатасси, ĕçсыннисен пурнăçпа йăла тата культура условийĕсене лайăхлатасси çинчен сÿтсе яваççĕ. Юлашки вăхăтра пухусен кун йĕркинче Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем, миршĕн тăракансен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн материалĕсем паллă вырăн йышăнаççĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра рабочисен пĕрлехи пухăвĕсем нумайăшĕ активлă иртеççĕ. Завкомпа цехкомсем пуху пулас умĕн организациллĕ ĕçсем чылай туса ирттереççĕ. Нумаях пулмасть 1952 çулхи коллективлă договора пурнăçлани тата 1953 çулшăн çĕнĕ договор тăвасси çинчен цехсенче рабочисен пухăвĕсенче сÿтсе явнă. Малтан тĕплĕн хатĕрленнипе пухусем нумайăшĕ пысăк активлăхпа иртнĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем дирекци, завком, цех руководителĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăюллăн критикленĕ, çĕнĕ договора кĕртме пурĕ 95 паха сĕнÿ панă. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен цехсенче сÿтсе явнă пухусем уйрăмах пысăк çĕкленÿпе иртнĕ.

Первомайски МТС-че механизаторсен пĕрлехи пухăвĕсене кашни уйăхра ирттереççĕ. Пуху пуласси çинчен темиçе кун маларах пĕлтереççĕ. Пухусенче коллектива хумхантаракан ыйтусем сÿтсе яваççĕ. Юлашки вăхăтра тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕç мĕнле пыни, ĕç дисциплинине çирĕплетесси, механизаторсен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтересси çинчен сÿтсе явнă. Рабочком председателĕ Д. Шаржанов юлташ пуху йышăннă решенисене, рабочисен сĕнĕвĕсене вăхăтра пурнăçлама тăрăшать. Вăл пуху хыççăн рабочком членĕсене, комисси председателĕсене протоколсемпе паллаштарать, рабочисен сĕнĕвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăнма кирли çинчен калаçса татăлать. Пухусенче унченхи решенисене мĕнле пурнăçлани çинчен каласа парать.

Куславккари çуртсем тăвакан заводра, Шупашкарти пир-авăр фабрикинче цехсенчи пухусем лайăх иртеççĕ.

Анчах чылай предприятисенчи фабкомсемпе завкомсем рабочисемпе служащисен пĕрлехи пухăвĕсене идеяпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ шайра ирттерме, пухура йышăннисене вăхăтра пурнăçлама тăрăшмаççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводăн нумай цехĕсенче рабочисен пухăвĕсене хутран-ситрен çеç ирттереççĕ. Пухусенче яланах тенĕ пек пĕр ыйту — цех уйăхра е кварталта ĕçленин итогĕсем çинчен сÿтсе яваççĕ. Хăшпĕр цехсенче пухусене сменăсем улшăннă вăхăтра ирттереççĕ. Паллах, васкаса ирттернĕ пуху никам кăмăлне те каймасть, ыйтусене кирлĕ пек татса пама, рабочисен активлăхне ÿстерме май параймасть. Завком цехкомсене кирлĕ пек пулăшмасть, пухусене лайăх хатĕрленсе ирттерме тăрăшмасть.

Первомайскинчи çу заводĕнче пĕлтĕр пурĕ те виçĕ пуху çеç ирттернĕ. Тен, пухусенче сÿтсе явмалли ыйтусем çук? Апла калама нимĕнле сăлтав та çук. Заводра ĕç дисциплини япăх, продукци пахалăхĕшĕн кĕрешмеççĕ, социализмлă ăмăртăва йĕркелемен.

Апат-çимĕç промышленноçĕпе вырăнти промышленность предприятийĕсенче, вăрманпромхозсенче те рабочисен пĕрлехи пухăвĕсене лайăх хатĕрленсе ирттермеççĕ. Хăшпĕр фабкомсемпе завкомсен тата рабочкомсен председателĕсем профсоюз демократине çирĕплетме тăрăшмаççĕ, профсоюз членĕсен прависене хĕсеççĕ, массăсен опычĕпе усă курма тăрăшмаççĕ.

Республикăри профсоюз обкомĕсем чылай. Вĕсем нумайăшĕ пухусем ирттерес ĕçри паха опыта пĕтĕçтерме, çав ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ, фабкомсемпе завкомсене тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ. Малашне обкомсен çак çитменлĕхе пĕтерекелле, кашни предприятире пухусем уйăхра пĕр хутран кая мар ирттермелле тумалла.

Пухусене хатĕрленсе ирттерес ĕç — çăмăл ĕç мар. Çавăнпа фабкомсемпе завкомсен тата цехкомсен председателĕсен пухусене ирттерме тĕплĕн хатĕрленмелле, ку ĕçе активистсене анлăн хутшăнтармалла. Пухусем активлă иртесси лайăх хатĕрленнинчен, ыйтусене суйласа илме пĕлнинчен, критикăпа самокритикăна сарма паха условисем туса панинчен килет. Хăш вăхăтра ирттересси çинчен те малтанах шухăшласа пăхмалла. Пуху хăçан, ăçта пуласси, унта мĕнле ыйтусем сÿтсе явма палăртни çинчен пурне те малтанах пĕлтерсе хурас пулать. Ун çинчен стена хаçачĕсемпе боевой листоксенче çырса кăларсан аван. Профсоюз активисчĕсен рабочисене кун йĕркинче тăракан ыйтусене сÿтсе явас ĕçе активлă хутшăнтарма пулăшас пулать. Пухусенче мĕнле ыйтусем сÿтсе явасси çинчен стахановецсемпе, профсоюз активисчĕсемпе, парторганизацисемпе канашлани усăллă.

Пухусенче кашни рабочи, служащи хăйĕн шухăш-кăмăлне ирĕккĕн, пĕр хăрамасăр каласа пама, çитменлĕхсене хăюллăн критиклеме пултартăр. Хăшпĕр хуçалăхпа профсоюз руководителĕсем критикленине сăмахпа йышăнаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме пулаççĕ, кайран манса каяççĕ. Çакă вăл критикăна вăйлатма пулăшмасть. Массăсен сĕнĕвĕсемпе шухăш-кăмăлне пурнăça кĕртни ĕçсыннисен активлăхĕпе пуçарулăхне ÿстерет. Массăсем çине таянса ĕçлекен руководительсем çитменлĕхсемпе чăрмавсене çăмăлрах пĕтереççĕ, государство заданийĕсене пĕрмаях ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Пухусен авторитечĕ унта йышăннă решенисен витĕмлĕ пулнинчен нумай килет. Рабочисем панă сĕнÿсене пурне те протокола кĕртмелле, решенисене çырнă чухне пренире тухса каланисене шута илмелле. Решенисем конкретлă, ĕçлĕ пулмалла.

Профсоюз комитечĕсен йышăннă решенисене пурнăçлама коллектива мобилизацилес пулать. Çĕршывра çĕнĕ пилĕк çуллăх плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту саралса пырать. Совет çыннисем вырăнти Советсен суйлав кунне ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн хăйсен вăй-халне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Профсоюз организацисем массăллă-агитациллĕ ĕçе, рабочисемпе служащисене воспитани парас ĕçе вăйлатса пыма тивĕçлĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

ПАРТИЛЛĔ ĔÇ ЫЙТĂВĔСЕМ

Парти кадрĕсен квалификацине ÿстерес ĕç

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата съездра И. В. Сталин юлташ тухса каланă сăмах ĕçсыннисен массисене коммунизм тăвас ĕçре хавхалантарса ертсе пымалли аслă программа пулса тăраççĕ. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ ĕçĕ партипе совет халăхне коммунизм строительствин çĕнтерĕвĕшĕн ырми-канми кĕрешме пысăк вăй-хăват парса тăрать. Коммунизм тумалли аслă программа парти организацийĕсем умне çĕнĕрен те çĕнĕ задачăсем кăларса тăратать, вĕсен кĕрешÿри пултарулăхне ÿстерсе, ĕç меслетне лайăхлатса пыма хушать.

Партин ертсе пыракан органĕсене ĕçсыннисен миллионлă массисемпе çыхăнтарса тăрас ĕçе пуçламăш парторганизацисем тăваççĕ. Партин пуçламăш организацийĕсем партин никĕсĕ пулса тăраççĕ, тесе çырнă пирĕн партин Уставĕнче.

Пуçламăш парторганизацисен кĕрешÿри пултарулăхне, вĕсен организаторла рольне ÿстерсе пырасси партин районсемпе хуласенчи комитечĕсен чи малтанхи, чи çывăх тивĕçĕ пулса тăрать.

Пурнăçри практикăллă ĕç çакна кăтартать: пуçламăш парторганизацисен кĕрешÿри пултарулăхĕ парторганизаци секретарĕн ĕçлĕ тата политикăллă пахалăхĕнчен нумай килет. Секретарь—политикăллă руководитель. Политикăллă руководитель, тенĕ В. И. Ленин, хăй мĕне ертсе пынишĕн кăна мар, вăл ертсе пыракан çынсем мĕнле ĕçленишĕн те ответлă пулса тăрать.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕ ĕçри партилĕх, большевикла принциплăх тĕлĕшпе примерлă пулма тивĕç, ĕçе творчествăллă пурнăçлас тĕлĕшпе унăн ытти юлташсене пример кăтартмалла.

Партиллĕ руководствăна тивĕçлĕ шая лартас пулсан, тесе вĕрентет пире Сталин юлташ, пуринчен малтан парти работникĕсен квалификацине ÿстерсе пымалла.

Сталин юлташăн хаклă кăтартăвне пурнăçласа, КПСС Шупашкар хула комитечĕ парти кадрĕсене воспитани парас тата вĕсене вĕрентес тĕлĕшпе сахал мар вăй хурать.

Хулари пуçламăш парторганизаци секретарĕсене пурне те парти вĕренĕвне хутшăнтарнă. Секретарьсенчен нумайăшĕ большевизм историйĕпе теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренет, нумай юлташсем каçхи партшкулпа марксизм-ленинизма вĕренмелли Университета çÿресе тата ытти майсемпе те хăйсен политикăллă пĕлĕвне ÿстереççĕ. Пропагандист ĕçне тÿррĕмĕн хутшăнса туса пыракан секретарьсем те сахал мар. Сăмахран, Бронникова юлташ пир-авăр фабрикинчи пуçламăш парторганизацире, Баранова юлташ республика больницинчи, Фомин юлташ «Водосвет» трестĕнчи, Бородин юлташ хула Совет исполкомĕн финанс пайĕнчи пуçламăш парторганизацисенче политикăллă вĕренĕве ертсе пыраççĕ.

Парти библиотекисем хулара пиллĕк шутланаççĕ. Пуçламăш парторганизацисенчи ертсе пыракан кадрсем библиотекăсене тăтăшах çÿреççĕ. Библиотекăсем парти кадрĕсене пулăшу парас ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Парти историйĕпе теорине вĕренекенсем валли ятарласа консультацисем ирттереççĕ. Библиотекăра партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă ĕçĕ çинчен докладсемпе лекцисем пулаççĕ.

Юлашки çулсенче хулари пуçламăш парторганизацисене ертсе пырас ĕçе çĕнĕрен чылай юлташсем хутшăнчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕн ертсе пырас ĕçре опыт сахалтарах. КПСС хула комитечĕ çамрăк секретарьсене тăтăшах канашлусене пухать, партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе йĕркелес ыйтусем тăрăх вĕсемпе уйрăм семинарсем ирттерет.

Хулари парторганизацин XIV-мĕш конференцийĕн кăтартăвĕсене шута илсе, хула комитечĕ пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе ĕçлеме ятарласа план турĕ. Ĕç планĕнче секретарьсен яланхи семинарĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Планра мĕнпур пуçламăш парторганизаци секретарĕсен пĕрлехи семинарĕсене тата промышленность предприятийĕсенчи, учрежденисенчи, шкулсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсем валли уйрăмшарăн ирттермелли семинарсен конкретлă срокĕсене палăртнă. Кашни семинарта мĕнле-мĕнле ыйтусем сÿтсе явмаллине кăтартнă. Плана 1952 çулхи октябрьпе 1953 çулхи май уйăхĕччченхи вăхăтлăха тунă.

Хула комитечĕ хăйĕн ĕç планне тĕплĕн пурнăçлама тăрăшать. Палăртнă чылай ыйтусене сÿтсе явнă. Юлашки вăхăтра семинарсенче «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе пуçламăш парторганизацисем умĕнче тăракан задачăсем», «Коммунистсен партийĕн Уставĕ—парти пурнăçĕн тĕп законĕ» тата ытти темăсене сÿтсе явнă.

Хулари пысăк предприятисенчи чылай парторганизацисенче цехсенчи парторганизаци секретарĕсем валли те яланхи семинарсем йĕркеленĕ.

КПСС XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем хыççăн хула комитечĕ актив валли лекцисемпе докладсем ытларах ирттерме тытăнчĕ. Лекцисене квалификациллĕ лекторсем вулаççĕ. Юлашки вăхăтра И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă ĕçĕ çинчен, тĕнчери лару-тăру, наукăри çĕнĕ япаласем çинчен тата ытти темăсем тăрăх КПСС Центральнăй Комитечĕн лекторĕсем лекцисем вуларĕç. Лайăх пахалăхлă лекцисем тăтăш итлени парти работникĕсен политикăллă тавракурăмĕпе ĕçлĕ квалификацине ÿстерес ĕçре нумай пулăшрĕ.

Хула комитечĕ кашни уйăхра пĕрер хутран кая мар пуçламăш парторганизаци секретарĕсен канашлăвĕсене ирттерет. Канашлусене умра тăракан конкретлă задачăсене мĕнле пурнăçламаллине вĕрентес тĕллевпе ирттеретпĕр, вĕсенче секретарьсене хула комитет бюровĕн уйрăм решенийĕсемпе паллаштаратпăр.

Парти работникĕсене воспитани памалли лайăх майсенчен пĕри — вĕсен отчечĕсене хула комитет бюровĕнче итлени пулса тăрать. Бюрора итлемелли ыйтăва эпир малтан тĕплĕн тĕпчесе вĕренме тăрăшатпăр. Ыйту хатĕрлеме пуçламăш парторганизацие хула комитет работникĕсем каяççĕ. Хула комитечĕ çавăн пекех хула комитечĕн членĕсене, актива ку ĕçе хутшăнтарать. Вырăнта тĕрĕсленĕ материалсемпе малтанах пуçламăш парторганизаци секретарĕсене е бюро членĕсене паллаштарма кирлине хула комитечĕ яланах асра тытать. Кунпа пĕрлех хула комитечĕн бюровĕн малтан палăртакан решенисен проекчĕсемпе те секретарьсене тĕплĕн паллаштаратпăр. Тĕрĕслÿ материалĕсемпе кирлĕ вăхăтра паллаштарнин пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Материалсемпе паллашнă май пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе предприяти е учреждени руководителĕсем хăйсен çитменлĕхĕсене асăрхаççĕ, хăйсен ĕçĕ çине критикăллă пăхакан пулаççĕ. Хула комитечĕсен представителĕсем, ĕçе тĕрĕсленипе пĕрлех, çитменлĕхсене пĕтерме вырăнти руководительсене практикăллă пулăшу параççĕ.

Эпир парти работникĕсен ытларах пайне май пур таран пĕтĕмĕшле практикăллă ĕçе хутшăнтарма тăрăшатпăр. Нумаях пулмасть хула комитечĕн пленумĕ хулари профсоюз организацийĕсем социализмлă ăмăртăва мĕнле ертсе пыни тата ĕçсыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн мĕнле тăрăшни çинчен сÿтсе яврĕ. Калас пулать, çак юлташсем, вырăнта пулса, пуçламăш парторганизаци секретарĕсене çитменлĕхсене пĕтерме пысăк пулăшу пачĕç.

Парти кадрĕсене ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе вырăнта пулăшу парассине хула комитечĕ яланах пысăк вырăна хурса хаклать. Пуçламăш парторганизацисене ертсе пыракан работниксене вырăнта пулăшас ĕç уйрăмах хулари партконференци хыççăн лайăхланнине палăртмалла. Хула комитечĕн работникĕсем, пуринчен ытла инструкторсем, пуçламăш парторганизацисенче час-часах пулаççĕ. Ертсе пыракан работниксене вĕсем ĕç планĕсем тума, парторганизаци хуçалăхне йĕркелеме, парти пухăвĕсене хатĕрлесе ирттерме пулăшаççĕ, коммунистсене критикăпа самокритикăна сарма тата çитменлĕхсене палăртма вĕрентеççĕ.

Парти работникĕсене воспитани парас тĕлĕшпе пирĕн ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Хăшпĕр пуçламăш парторганизаци секретарĕсем хăйсен пĕтĕмĕшле пĕлĕвне ÿстерме тăрăшмаççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Аслă Ленин: организациллĕ ĕçре чи кирли — çынсене тĕрĕс суйласа илни тата ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслени пулать, тесе кăтартса пани çаплах çителĕксĕр пурнăça кĕрсе пырать-ха».

Çак кăтарту пирĕн хула комитечĕн ĕçне те пĕтĕмĕшпех пырса тивет.

Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тесен — пирĕн, пуринчен малтан, парторганизаци секретарĕсен ĕçне тĕрĕслессине вăйлатма тивет. Пуçламăш парторганизацисене ертсе пыракан работниксем хăйсен идейăпа политикăллă шайне, марксистла-ленинла пĕлĕвне ÿстерччĕр тесе тата ытларах тăрăшмалла пулать.

Ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслесе тăрассин шайне ÿстерни кирлĕ. Партин шалти демократийĕ кăларса тăратакан ыйтусене тĕрĕс пурнăçлас, критикăпа самокритикăна ытларах сармалла тăвас тĕлĕшпе пуçламăш парторганизаци руководителĕсене малашне тата та нумайрах пулăшу памалла пулать.

Ĕçе тăтăшах тĕрĕслесе тăни секретарьсен ответлăхне ÿстерме май парĕ, парти кадрĕсен тимлĕхĕпе сыхăлăхне вăйлатма, партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă мĕнпур ĕçсене лайăхлатма пулăшĕ. Пуçламăш парторганизацисен кĕрешÿри пултарулăхне вăйлатса пырса, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене пурнăçлас ĕçре малашне тата та пысăк çĕнтерÿсем туса пырăпăр.

Ф. ПРОКОФЬЕВ,
КПСС Шупашкар хула комитечĕн партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕн заведующийĕ.

Республикăри колхозсенче йĕтĕнпе кантăр акса тăвас ĕçе малалла вăйлатассишĕн

И. АФАНАСЬЕВ,

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче пĕтĕм халăх хуçалăхне малалла аталантарнă никĕс çинче совет çыннисен пурнăçне малалла лайăхлатма тата вĕсен культурăллă шайне ӳстерсе пыма палăртнă. Çак задачăна пурнăçлас ĕçре техникăллă культурăсем акса тăвассине вăйлатни, таварлă продукци шутне ӳстерни тата ялхуçалăх продукцийĕн пахалăхне лайăхлатни пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Пиллĕкçуллăх хушшинче йĕтĕн сӳсĕ туса илессине 40—50 процент ӳстермелле. Çакна май хура тăпраллă мар тăрăхри районсенче, вăл шута пирĕн республика та кĕрет, йĕтĕн сӳсĕн тухăçлăхне гектар пуçне 4,5—5,5 центнера çитермелле.

Малта пыракан колхозсен опычĕ кашни колхоз çавăн пек тухăçлă йĕтĕн туса илме пултарни çинчен калать. Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз 1952 çулта 15 гектар çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 8 центнер йĕтĕн вăрри тата 6 центнер йĕтĕн сӳсĕ туса илнĕ. Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз 20 гектар çинчен гектар пуçне вăтам шутпа 12 центнер кантăр вăрри, 10 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕ. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 30 гектар çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 6,5 центнер кантăр вăрри, 7 центнер кантăр сӳсĕ тухнă.

Малта пыракан колхозсем техникăллă культурăсем акса тумалли плана чылай иртерсе тултараççĕ. Çакăнпа пĕрлех, халăх хуçалăхĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе, вĕсем продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, йĕтĕнпе кантăр сӳсĕн лайăхрах сорчĕсене ытларах туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Йĕтĕнпе кантăр акса туни республикăри чылай колхозсемшĕн вĕсен обществăллă пуянлăхне тата колхозниксен тупăшне ӳстермелли тĕп май пулса тăрать.

Сăмахран, юлашки çулсенче Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра укçа-тенкĕ тупăшĕ çакăн пек ӳсе пынă (пиншер тенкĕпе):

	1950 ç.	1951 ç.	1952 ç.
Пĕтĕм укçа-тенкĕ тупăшĕ	838	1.280	1.286
Вăл шутра кантăр акса тунинчен	138	551	437

1950 çулта кантăр акнă кашни гектартан 7 пин тенке яхăн тупăш илнĕ. 1951 çулта кантăр акнă кашни гектар пуçне 18 пин тенкĕ ытла тупăш пулнă. Кунсăр пуçне, кантăр продукцине государствăна панăшăн колхоз 2.138 килограмм сахăр, 992 килограмм ӳсентăран çăвĕ, 942 центнер жмых туяннă. 1952 çулта колхоз кантăр акнă кашни гектар пуçне 14,5 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Укçа-тенкĕ тупăшĕ ӳсни пайланман фондсене татти-сыпписĕр ӳстерсе пымалли никĕс пулса тăрать Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пайланман фонд 1951 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2.248,7 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2.653 пин тенкĕ таран ӳснĕ.

Кантăрăн пĕтĕм продукцине тата таварлă продукцине ӳстерни, колхозăн обществăллă хуçалăхне пысăклатмалли никĕс пулса тăнипе пĕрлех, колхозниксен тупăшне ӳстермелли çирĕп никĕс пулать. 1950 çулта Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх укçан 145 пин тенкĕ панă пулсан, 1951 çулта вара 398,5 пин тенкĕ валеçнĕ.

Республикăри ытти нумай колхозсем те йĕтĕнпе кантăр акса туса пысăк тупăш илеççĕ.

1953 çулхи план тăрăх пирĕн республикăри ялхуçалăхĕ умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вăл задачăсене пурнăçлани партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсене пурнăçлани пулать. Кантăр акмалли лаптăка 74 процент, йĕтĕн-долгунец акмалли лаптăка 28 процент ӳстермелле. 1953 çулта техникăллă культурăсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те заданисем пысăк.

Йĕтĕнпе кантăр акмалли государство планĕнче акмалли лаптăка йĕтĕнпе сӳс завочĕсен çывăхĕнчи колхозсенче ӳстерме палăртнă. Çакă вăл йĕтĕнпе кантăра заводсем çывăхĕнче акса тума, заводсене чĕртавар çителĕклĕ парса тăма кирлĕ. Колхозсем валли план тунă чухне йĕтĕнпе кантăр акмалли лаптăка вакласа пĕтерме юрамасть.

Партипе Совет правительстви кăтартса панă тăрăх, йĕтĕн акса тăвакан колхозсене пысăк çăмăллăхсем параççĕ. Анчах та мĕнпур акмалли лаптăкран 2 процент ытларах лаптăк çине йĕтĕн акакан колхозсем кăна çав çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Кунтан çакăн пек вывод тумалла: йĕтĕне колхозсенче пысăкрах лаптăксем çинче акмалла. Уйрăм колхозсенче йĕтĕнпе кантăр акмалли заданине кашни бригадăнах пĕр пек пама тăрăшаççĕ, сăмахран, кашни бригадăна 2—3-шер гектар акма задани параççĕ. Çакăн пек йĕркене тĕрĕс тесе шутлама май çук. Техникăллă культурăсем акмалли лаптăка ытлашши вакласа пĕтерни уй-хир ĕçĕсене механизацилеме, çав культурăсене акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксен ĕçне организацилеме чăрмантарать.

Государство заданине пурнăçлас ĕçре колхозсенче плансене вăхăтра тата тĕрĕс туни пысăк вырăн йышăнать. Плансене вăхăтра тумалла, ку ĕçе колхозăн мĕнпур активне тата колхозниксен анлă массисене хутшăнтармалла. Плансем тăвас ĕçре колхозсене ялхуçалăх специалисчĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ.

Производство планĕсене колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче сӳтсе явмалла тата çирĕплетмелле. Бригадăсене паракан заданисене бригадăсен пухăвĕсенче сӳтсе явмалла тата кашни звенопа колхозник патне çитермелле.

Ялхуçалăх органĕсен, МТС-сен тата колхозсен руководителĕсен пысăк задачи вăл—акма палăртнă лаптăк валли йĕтĕнпе кантăр вăрлăхĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хурасси.

Хальхи вăхăтра вăрлăх хатĕрлес тата тасатса хурас ĕç çителĕксĕр пырать. Республикăри хăшпĕр районсем çеç йĕтĕнпе кантăр вăрлăхĕ государство планне тултарма çителĕклĕ хатĕрленĕ. Нумай районсемпе колхозсенче çак культурăсен вăрлăхĕ çитмест. Йĕтĕнпе кантăр сапса пĕтермен колхозсенче çак ĕçе çитес кунсенче вĕçлемелле, йĕтĕн-кантăрсен вăрлăх фондне кирлĕ чухлĕ хывмалла. Хăйсен хуçалăхĕнче вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлемен колхозсен вăрлăха ытти колхозсемпе улăштарса е укçан илмелле. Колхозсенче йĕтĕнпе кантăр вăрлăхне тĕрĕс шута илес, лайăх пăхса усрас ĕçе куллен тĕрĕслемелле, вăрлăха пăсма тата салатса пĕтерме памалла мар.

Мĕнпур колхозсенче вăрлăх фондне хывнă йĕтĕнпе кантăр вăрлăхĕн пахалăхне тĕрĕслесе пăхмалла. Çак ĕçе çитес кунсенче туса пĕтермелле. Акма тухиччен, ик-виç эрне маларах, вăрлăхсене тепĕр хут тĕрĕслесе пăхмалла. Нӳрĕллĕ йĕтĕнпе кантăр вăррисене ятарласа тунă сушилкăсенче е çуртсенче типĕтес пулать. Лайăхрах шăтса тухчăр тесе вăрлăха акиччен хĕвеллĕ кунсенче сарса хурса уçăлтармалла.

Кантăр, çавăн пекех йĕтĕн те удобренисемпе лайăх çемçетнĕ, кăпăш тăпра çинче çеç тухăçлă пулаççĕ. Çавăнпа йĕтĕнпе кантăр акмалли вырăна, удобренисем хурса, тарăн сухаласа хатĕрлемелле.

Удобренисем сахал тăкнă тăпра çинче тухăçлă йĕтĕнпе кантăр туса илесси çинчен шухăшламалли те çук. Çавăнпа кăçал йĕтĕнпе кантăр акса тăвакан колхозсенче пуринче те асăннă культурăсем акма удобренисем çителĕклĕ тăкнă, кĕрхи çĕртме тунă участоксене уйăрас пулать. Кăçал техникăллă культурăсем, уйрăмах кантăр ытти çулхисенчен нумайрах акса хăвармалла. Çавăнпа иртнĕ çулсенче кок-сагыз акнă, удобренисем нумай тăкнă участоксем çине йĕтĕнпе кантăр акмалла. Колхозсен уй-хирти пусă çаврăнăшĕсенче халиччен кок-сагыз акнă участокĕсем çинче яланах кантăр акмалли вырăнсем тăвас пулать. Яланах кантăр акса ӳстерме ятарласа участоксем туни республикăри колхозсене çак культурăсене çулсерен тухăçлă ӳстерме тата унтан пысăк тупăш илме май парĕ.

Кантăрпа йĕтĕне унччен нумай çул ӳсекен курăксем йышăннă вырăна акмалла. Пирĕн курăксем акса йĕркелесе çитернĕ пусă çаврăнăшлĕ колхозсем нумай мар-ха. Çавăнпа йĕтĕнпе кантăра пусă çаврăнăшĕнче кĕрхи тырăсем, тымарçимĕçсем, çĕрулмипе пăрçа йышши культурăсем хыççăн акма юрать.

Анчах кантăрпа йĕтĕн тухăçлăхĕ пысăк пуласси вĕсене акас умĕн çав участоксенче мĕнле культурăсем акса лартса туниччен кăна килмест. Йĕтĕнпе кантăр тухăçлăхне ӳстерме уй-хире тислĕк нумай кăларас пулать.

Йĕтĕн е кантăр акмалли участока кĕркунне тислĕк тата ытти удобренисем кăларман пулсан, çуркунне вара çав участока лайăх çĕрнĕ тислĕк тăкмалла, çак ĕçе обязательнă тăвас пулать.

Кĕрхи çĕртме уйне çуркунне культиваци тăвиччен тислĕк тăкнисĕр пуçне, йĕтĕн акмалли участокăн кашни гектарĕ çине 5—6 центнер кĕл, кантăр акмалли участокăн кашни гектарĕ çине 8—10 центнер кĕл сапсан усăллă пулать. Йĕтĕнпе кантăр тухăçлăхне ӳстерме кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумай пулăшать, çав тислĕке çуркунне, кĕрхи çĕртме уйне культиваци тăвас умĕн, кашни гектар çине 4—6 центнер тăкмалла.

Йĕтĕнпе кантăр участокĕсене кăпкалатма минераллă удобренисемпе усă курмалла. Йĕтĕнпе кантăр участокĕ çине сапма ятарласа уйăрса панă минераллă удобренисемпе урăх культурăсем акнă участоксене кăпкалатма усă курмалла мар, унпа йĕтĕнпе кантăр участокĕсене çемçетме çеç усă курас пулать. Çак участоксем çине пĕрчĕкленĕ минераллă удобренисем, уйрăмах суперфосфат сапни усăллă.

Кантăрпа йĕтĕн участокĕсене тислĕк тăкса е минераллă удобрени сапса лайăх çемçетнĕ пулсан та, вĕсен калчисене çуллахи вăхăтра апат памасăр хăварма çук. Апат пани вĕсен тухăçлăхне нумай ӳстерет Апат парас умĕн калчасемшĕн çав вăхăтра мĕнле апат ытларах кирлине шута илес пулать, мĕнле удобрени сапни усă ытларах панине кура калчасене апатлантармалла.

Йĕтĕн участокĕсем çине малтанхи хут калча шăтса тухсанах удобрени сапас пулать, йĕтĕне кая юлса аксан, унăн калчи шăтса тухиччен, унта удобрени сапмалла. Кайран вара, йĕтĕн мĕнле ӳснине кура, апат парса тăмалла. Йĕтĕн тăррисенче чечек чăмăрĕсем пулас умĕн калчана юлашки хут апатлантарас пулать. Юлашки хут тислĕк шĕвекĕ сапмалла тата калиллĕ удобрени типĕлле сапса тухмалла.

Кантăр калчисем çинче 3—4-шар мăшăр çулçă тухсан, çав калчасене нимĕнрен ытларах азотлă удобренисем памалла.

Хĕл хушшинче удобренисем нумайрах хатĕрлеме тăрăшас пулать. Çак ĕçе лайăх йĕркелесен, удобрени çителĕклĕ хатĕрлеме май пур. Кашни колхоза йĕтĕнпе кантăр участокĕсем валли мĕн чухлĕ удобрени хатĕрлеме кирлине, çав удобренине ăçта илмеллине тата ăçта пухмаллине, ăçтан кӳрсе килмеллине палăртса памалла. Удобренисем хатĕрлес ĕçе организацилессишĕн кам ответлă пулассине палăртмалла. Удобренисем хатĕрлес ĕç мĕнле пынине, вĕсене мĕнле усранине, вăхăтра кӳрсе килнине тăтăшах тĕрĕслесе тăрас пулать.

Кантăрпа йĕтĕн участокĕсем валли удоберни мĕн чухлĕ нумайрах хатĕрленинчен тата участоксем çине кăларнинчен вĕсен тухăçлăхĕ пысăк пуласси килет. Тислĕк, торф, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата ытти удобренисем нумайрах хатĕрлеме республикăри пур колхозсенче те пур майсемпе те тăрăшас пулать.

Кантăрпа йĕтĕн акмалли участоксенче нӳрĕ ытларах пулни вĕсен тухăçлăхне ӳстерет. Çавăнпа та хĕллехи вăхăтра çав участоксем çинче юр нумайрах пухма, çурхи шывсене тытса хăварма тăрăшас пулать.

Çуркунне, кĕрхи çĕртме çинчи суха кассисем кушăхма пуçласанах, тăпра пĕтĕмпех типсе ан кайтăр тесе, тăпра мĕнлине кура участоксене икшер-виçшер хут сӳрелемелле. Кĕрхи çĕртме тунă вырăна çĕнĕрен сухаламалла мар, ăна культивацилес пулать. Кун пирки акă мĕншĕн аса илтерме тивет: МТС работникĕсем кĕрхи çĕртме тунă участока çуркунне культиваци тăвас вырăнне тепĕр хут сухаласа пăрахма пăхаççĕ. Çав участоксене тепĕр хут сухалама чармалла. Йĕтĕне машинăпа пухса кĕртме лайăх пултăр тесе, ăна акмалли вырăнти тăпрана тĕплĕ якатма тăрăшас пулать.

Калча пĕр харăс тата пĕр тикĕс шăтса тухтăр тесен, йĕтĕнпе кантăра вăхăтра акса хăвармалла. Йĕтĕне иртерех, кĕрхи çĕртмене малтанхи хут сӳреленĕ хыççăн 6—7 кунран кая юлмасăр акса хăвармалла; йĕтĕне, уйрăмах вăрлăх участокĕсем çине акмаллине, кĕске вăхăтра 4—5 кун хушшинче акса пĕтерме тăрăшмалла. Кантăра та тĕштырăсем акса пĕтернĕ хыççăнах, иртерех акас пулать.

Йĕтĕнпе кантăр вăрлăхĕсене акма хатĕрлес ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Тĕплĕн сортласа çитернĕ, шултра, паха вăрлăхпа акмалла. Вăрлăх мĕнле шăтнине малтан тĕрĕслесе пĕлмелле. Вăрлăх лайăх шăтнине пĕлмесĕр, ăна акма юрамасть.

Кантăр тухăçлăхне ӳстерес, кантăр вăрри тата сӳсĕ тухăçлă пултăр тесен, ăна анлă ретпе—лентăллă йĕркепе акмалла.

Сарлака ретсемпе акни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ку вăл çакăнтан курăнать: çак меслетпе акни калчасене лайăхрах пăхса ӳстерме, ретсем хушшине кăпкалатассине механизацилеме, çумкурăксене çумлама, апат пама, искусственнăй майпа шăркалантарма, пуса татма лайăхрах майсем туса парать.

Сарлака ретсемпе (е лентăллă майпа) вăрлăх участокĕсене акни уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ытти участоксенче гектар çине 120—130-шар килограмм вăрлăх акмалла пулсан, вăрлăх участокĕсенче кашни гектар çине 60—70-шер килограмм аксан та çителĕклĕ.

Сарлака ретсемпе акнин пĕлтерĕшĕ çинчен эпир яланах каласатпăр, анчах çак меслете ĕçе кĕртсе çитерме пултараймарăмăр-ха. Çакă вăл пирĕн республикăра техникăллă культурăсене тахçантанпах нормăран иртерсе акнинчен килнĕ. Çăра акнă чухне йĕтĕн вĕтĕ пулать. Кантăрпа йĕтĕн пирĕ çĕленĕ чухне çакă вăл кирлĕ пулнă теме те пулать. Халĕ, йĕтĕн пир çĕлеме мар, ытларах канат тума кайнă чухне, çирĕпрех йĕтĕн кирлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ сарлака ретсемпе акмалли меслете пур майсемпе анлăрах сарса пымалла. Ку вăл промышленноçа кăна мар, колхозсене те питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен сарлака ретсемпе акнă чухне вăрлăх та (50 процент тата унтан та ытларах), сӳс те ытларах туса илме пулать.

Кăçалхи çул, йĕтĕне икĕ хут ытларах акса хăвармалла пулнă пирки тата вăрлăх çителĕксĕр пулнă пирки ăна пур çерте те сарлака ретсемпе акса хăварма тăрăшмалла. Çак меслет агротехника тĕлĕшĕнчен чи пахарахи те лайăхраххи пулса тăрать.

Вăрлăх участокĕсене те сарлака ретсемпе акас пулать. Алăпа акни пачах пулмалла мар. Йĕтĕн акнă чухне МТС-сенчи ансăр ретлĕ сеялкăсемпе пуринпе те усă курас пулать.

Кăçал йĕтĕнпе кантăр калчисене пăхса ӳстерес ĕç çине тимлĕ пăхмалла. Нумай колхозсенче ку ĕç çителĕксĕр пырать, çавна пула йĕтĕн е кантăр акнă лаптăксенче çумкурăксем нумай ӳсеççĕ, тухăçлăх та çителĕксĕр пулать, йĕтĕне е кантăра пухса илме чăрмавсем пулаççĕ тата продукци пахалăхĕ те чакать.

Акнă лаптăксене калчасем шăтса тухиччĕнех асăрхама тытăнмалла. Акнă лаптăк сийĕ хытса ларсан, калча шăтса тухиччен сӳрелес пулать. Çумкурăксем шăтса тухсан, вĕсене çумламалла. Акнă лаптăксене йĕтĕн çитĕннĕ май рет хушшисем питĕрĕниччен икĕ хут кăпкалатмалла. Сарлака ретсемпе акнă лаптăксене, çумкурăксене çумланисĕр пуçне, рет хушшисене 3—4 хутчен кăпкалатмалла. Акнă лаптăксене йĕтĕн 10—15 сантиметр тăршшĕ ӳссен пĕрремĕш хут, ун хыççăн 10—15 кун иртсен, çумкурăксем шăтса тухсан, иккĕмĕш хут çумламалла.

Вăрлăх участокĕсене уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Йĕтĕн чечеке ларнă вăхăтра ăна искусственнăй майпа кашни ик-виç кун хушшинче шăркалантармалла.

Çак мĕнпур мероприятисене пурнăçа кĕртни пысăк тухăçлă йĕтĕнпе кантăр ӳстерсе илме май парать.

1953 çулта ялхуçалăх органĕсен, МТС-сен, ялхуçалăх специалисчĕсен, йĕтĕнпе кантăр ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадирсемпе звеньевойсен йĕтĕнпе кантăра вăхăтра тата йĕркеллĕн пухса кĕртме тăрăшмалла.

Йĕтĕнпе кантăра пухса кĕртнĕ чухне МТС-сенчи пĕтĕм техникăпа туллин усă курма тăрăшмалла. Çак ĕçе чи кĕске срoксенче тата пĕр тăкаксăр туса иртермелле. Пухса кĕртнĕ кантăрпа йĕтĕне вăхăтра çапса шыва хутмалла. Çавăн пекех кантăрпа йĕтĕне вăхăтра шывран кăларса е сарнă хыççăн вăхăтра пухса илсе пĕрремĕш хут тасатма тытăнмалла. Çапла майпа 1953 çулта контрактаци договорĕсем тăрăх илнĕ обязательствăсене пур колхозсен те пурнăçламалла тăвас пулать.

Колхозсенче йĕтĕнпе кантăр ӳстерсе илес ĕçе татăклăн лайăхлатма ĕçе организацилес тата уншăн тӳлес тĕлĕшпе тăракан ыйтусене тĕрĕс татса памалла. Ĕçри обезличкăна тата колхозниксене ĕçшĕн тӳлес йĕркери уравниловкăна пĕтерес пулать.

Çак тĕллевпе йĕтĕн е кантăр акса тăвакан кашни колхозра бригадăсенче йĕтĕнпе кантăр акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме звеносем организацилемелле. Вĕсене участоксем уйăрса памалла та пур ĕççене те: хĕллехи агротехникăллă мероприятисенчен пуçласа продукцие государствăна парас ĕçсем патне çитиччĕнех пĕр звено туса иртермелле пултăр тесе тăрăшмалла. Звеносене ăнăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла, хĕллехи вăхăтра агротехникăна вĕренес ĕçе организацилемелле. Ĕç нормисене тĕрĕс тумалла, звено е уйрăм колхозниксем йĕтĕнпе кантăр туса илнине тĕплĕн шута илмелле, вара вĕсене ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсе[illegible] хисепĕ тăрăх тĕрĕс тӳлемелле.

Йĕтĕнпе кантăр туса илнĕшĕн ха[illegible]лантарас тĕлĕшпе партипе Совет пра[illegible]тельстви кăтартăвĕсене пур колхозниксемпе колхозницăсем те пĕлсе тăччăр тесе тăрăшмалла.

Çав кăтарту тăрăх, йĕтĕн сӳсĕн хакне вăтам шутпа 80 процент, кантăр сӳсĕн хакне вăтам шутпа 30 процент ӳстернĕ.

Çав кăтарту тăрăх обязательнăй йĕркепе йĕтĕн памалли нормăна 30—35 процент тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли нормăна 50 процент чакарнă. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă тăрăх укçан илнĕ премие 40 процент, тата йĕтĕн-долгунец панăшăн илнĕ туллăн 40 процентне колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама сĕннĕ. Государствăна йĕтĕн-долгунец тата кантăр памалли плана пурнăçланă пулсан, колхоз илнĕ укçан 1 проценчĕ чухлĕ колхоз председательне премии памалла тунă.

Государствăна сӳс-кантăр тата йĕтĕн-долгунец памалли плана колхоз тăрăх кашни гектар пуçне тултарнинчен кая мар тултарнă бригада бригадирне тупăшăн 2 проценчĕ чухлĕ премии памалла.

Государствăна сӳс-кантăр тата йĕтĕн-долгунец памалли плана колхоз тăрăх кашни гектар пуçне палăртнинчен кая мар тултарнă звено звеньевойне тупăшăн 3 проценчĕ чухлĕ премии параççĕ.

Йĕтĕн тата кантăр акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксене хавхалантарма йĕтĕнпе кантăр акса тăвас ĕçе аталантармалли тата йĕтĕн-долгунецпа кантăрăн таварлăхне ӳстермелли мерăсем çинчен партипе Совет правительстви кăтартса панисене çирĕппĕн пурнăçласа пымалла. Çакă вăл пирĕн республикăри колхозсенче йĕтĕнпе кантăр акса тăвас ĕçе татăклăнах лайăхлатма май парать.

Пирĕн республикăри колхозсенче йĕтĕнпе кантăр акса тăвас ĕçе малалла аталантарас тĕлĕшпе машина-трактор станцисем пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕç.

Йĕтĕнпе кантăр акса тăвас ĕçре пирĕн МТС-сенчи мĕнпур машинăсемпе тухăçлă усă курмалла. Ку тĕлĕшпе йĕтĕне пухса кĕртмелли тата йĕтĕнпе кантăр акса тумалли ытти машинăсемпе ĕçлеме кадрсем хатĕрлесси тĕп ыйту пулса тăрать.

Йĕтĕнпе кантăра малтан хатĕрлеме агрегатсем илнĕ е илекен МТС-сен çав агрегатсене тăтăшах тата тухăçлă ĕçлеттермелле тăвас пулать. Агрегатсене вырнаçтарса лартма çурт-йĕрсем тумалла. Йĕтĕнпе кантăра малтан хатĕрлекен пунктсем тума, йĕпетмелли тата типĕтмелли хуçалăха организацилеме МТС-сен колхозсене тивĕçлĕ пулăшу парса тăмалла.

Колхозсенче йывăр ĕçсене механизацилессине вăйлатни тата лайăхлатни, уйрăмах йĕтĕнпе кантăра пухса кĕртес тата малтан хатĕрлес ĕçсене механизацилени йĕтĕнпе кантăр акса тăвас ĕçе вăхăтра иртерме тата тăкаксене нумай чакарма май парать.

Йĕтĕнпе кантăр тухăçлăхне пĕрмай ӳстерсе пырас тесен, колхозсене агрономиллĕ пулăшу парассине тата ялхуçалăх специалисчĕсен ĕçне лайăхлатас пулать.

Ялхуçалăх специалисчĕсем енчен уйрăмах çакăн пек пулăшу кирлĕ: плана колхозсем патне, колхозра—бригадăсем патне вăхăтра çитермелле, ĕçе тата ĕçшĕн тӳлессине тĕрĕс организацилемелле, малта пыракан опыта пур колхозсенче те пурнăçласа пымалла. Çак ыйтусем çине районти ялхуçалăх пайĕсен главнăй агрономĕсем тата МТС-сен аслă агрономĕсем тимлĕ пăхмалла.

Государствăна йĕтĕнпе кантăр продукцийĕ памалли плана республикăри пур колхозсем тăрăх та тултармалла тăвасси—хатĕрлев тата ялхуçалăх органĕсен çывăхри задачи пулса тăрать.

Государство умĕнчи обязательствăсене пур ялхуçалăх продукцийĕ енĕпе те пурнăçласси—колхозсен пирвайхи тивĕçĕ. Нумай колхозсем тата районсем государствăна йĕтĕнпе кантăр продукцийĕ парас тĕлĕшпе контрактаци договорĕпе илнĕ хăйсен обязательствисене пĕтĕмпех тата иртерсе пурнăçларĕç. Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз йĕтĕн сӳсĕ памалли плана 318 процент, йĕтĕн вăрлăхĕ памалли плана [illegible] процент тултарнă; Етĕрне районĕн[illegible]уденный ячĕпе тăракан колхоз йĕтĕн сӳсĕ памалли плана 284 процент, вăрлăх памалли плана 390 процент; Вăрмар районĕнчи «Маяк» колхоз кантăр сӳсĕ памалли плана 190 процент, вăрлăх—100 процент; Комсомольски районĕнчи «Дружба» колхоз кантăр сӳсĕ памалли плана 204 процент, вăрлăх памалли плана 100 процент тултарнă.

Вăрнар районĕнчи колхозсем 1953 çулхи январĕн 25-мĕшĕ тĕлне йĕтĕн сӳсĕ памалли плана 143 процент, вăрлăх памалли плана 190,4 процент, Улатăр районĕнчи колхозсем йĕтĕн сӳсĕ памалли плана 129 процент тултарнă тата çак кунсенче вăрлăх парса тăтаççĕ.

Канаш районĕнчи колхозсем те хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçларĕç: кантăр сӳсĕ памалли плана 113 процент, вăрлăх памалли плана 109 процент тултарчĕç.

Анчах, пĕтĕм республикипе илес пулсан, государствăна йĕтĕнпе кантăр продукцийĕ памалли плана тултарас ĕç юлса пырать. Республика йĕтĕн сӳсĕ памалли плана пĕтĕмпе те 79 процент, вăрлăх памалли плана 93,6 процент кăна тултарнă. Кантăр продукцийĕ памалли плана тултарас ĕç тата та начартарах тăрать.

Халĕ колхоз руководителĕсем, ялхуçалăх тата хатĕрлев органĕсем умĕнче паян татса памалли çакăн пек задача тăрать: хутнă тата хутман кантăра, çавăн пекех йĕтĕне заводсене леçсе парас ĕçе халех вĕçлемелле, çав культурăсен вăрлăхне памалли плана та пĕтĕмпех тата хăвăрт тултармалла. Çавăн пек тума пирĕн майсем çителĕклĕ.

Пирĕн республикăри йĕтĕн тата кантăр акса тăвакансем тухăçлăха ӳстерес тĕлĕшпе пуян опыт пухрĕç. Çак паха опыта пур колхозсенче те сарса пырасси, çав никĕс çинче республикăра йĕтĕнпе кантăр акса тăвассине малалла вăйлатса пырасси хальхи вăхăтра пысăк задача пулса тăрать.



М. С. МИТИН юлташ—

Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз председателĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши выльăхсем енĕпе те тултарнă, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне нумай ӳстернĕ.

Т. Я. КРАСНОВА юлташ—

Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхоз членĕ.

1952 çулта вăтам шутпа кашни сысна аминчен 17,5 çура илсе ӳстернĕ, 1953 çулта 21 çура илсе ӳстерме пулнă.

Улатăр хула Совет исполкомĕн финанс пайне Хĕрлĕ ялав памалла тунă

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çак кунсенче финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Улатăр хула Совет исполкомĕн финанс пайĕ мала тухнине палăртнă.

Улатăр хула Совет исполкомĕн финанс пайĕ иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталти плана халăх укçа-тенкине мобилизацилес енĕпе 107,3 процент, çав шутра налогсем енĕпе—101,2 процент, страховани енĕпе—107,3 процент, перекет кассисем енĕпе—114,1 процент, государство тупăшĕсем енĕпе—104,5 процент тултарнă.

Финанс планне лайăх тултарнăшăн Улатăр хула Совет исполкомĕн финанс пайне Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата 5.000 тенкĕ премии памалла тунă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта Канашпа Шупашкар хула Совечĕсен исполкомĕсен финанс пайĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ финанс планне тултарас тĕлĕшпе иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Чкаловски, Шупашкар тата Элĕк райисполкомĕсен финанс пайĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртса, ку финанс пайĕсене хăйсен ĕçне вăйлатма, кăçалхи пĕррремĕш кварталти плана пур енĕпе те тултарассишĕн тăрăшма хушнă.

„Агитатор блокночĕн“ черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, виççĕмĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ.

Номерте агитаторсемпе пропагандистсене пулăшма «Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарни», «Социализмлă экономика ӳсет тата вăйланса пырать» ятлă статьясем пичетленнĕ. Кунсăр пуçне, суйлавçăсене пулăшма «Сасăламалли йĕрке çинчен» ятлă консультаци пичетленнĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сенче ТРАКТОРСЕМПЕ ЫТТИ МАШИНĂСЕМ ЮСАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

1953 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ юсанă (процентпа)

МТС-сем	Тракторсем	Плугсем	Сеялкăсем	Культиваторсем
Сĕнтĕр	79,1	52,6	72,7	66,7
Йĕпреç	77,1	76,1	88,5	100
Çĕмĕрле	70,7	78,9	74,1	95,6
Пăрачкав	69,5	100	82,3	90
Кувакино	64,6	55,5	63,6	45,8
Комсомольски	63,3	89,1	95	89,1
Шăмăршă	60,6	41,5	47,4	47,8
Вăрнар	58,9	38,9	50	19
Элĕк	58,7	70,4	71	80
Вăрмар	55,9	43,8	69,5	37,7
Шăхасан	55,3	58,1	60,7	79,6
Сурмайдан	54,8	61,4	50	70,6
Улатăр	54,7	67,2	57,1	62,7
Çĕрпӳ	52,6	50,6	71,4	68,4
Первомайски	50,9	64	50	47,7
Ишлей	47,6	67,5	80	77,8
Тăвай	47	58	66,1	61,1
Елчĕк	46,8	48,8	56,7	39,7
Шупашкар	46,8	41,3	53,1	48,6
Канаш	46 1	41,9	45,2	50
Муркаш	45	73,7	52,6	62,5
Октябрьски	44,7	52,4	47,2	37,8
Сĕнтĕрвăрри	44,4	46,4	55,5	36,3
Красноармейски	43,4	67,5	56,8	75
Куславкка	42	61,4	65	67,5
Сиява	41,2	56,2	80,9	111,7
Калинино	40,4	50	63,1	57,4
Етĕрне	39,6	52,6	46,6	53,6
Советски	39,3	45,4	100	95
Чкаловски	36,3	50	79,1	62,3
Чурачăк	32,1	39,5	70	60,8
Хĕрлĕ Чутай	26,8	29,1	54,5	50

Ĕçри çитĕнӳсемшĕн

КАЛИНИНО. «Волга» колхозра (председателĕ Е. Воробьев) иртнĕ çулта тырпул тухăçлăхĕ пысăк пулчĕ. Пĕрремĕш бригада бригадирĕ А. Иванов юлташ сăнав участокĕ çинче агротехникăн комплекслă мероприятийĕсене пурнăçласа 6 гектар çинче кашни гектартан 29,56-шар центнер çурхи тулă туса илчĕ. Ку бригадăна 26 гектар çĕр çирĕплетсе панă. Вăл кашни гектартан вăтам шутпа 22,4-шер центнер çурхи тулă пухса кĕртрĕ.

Ф. Терентьев юлташ ертсе пыракан иккĕмĕш бригада 8 гектар çинчен кашни гектар пуçне 19 центнер ытла пăрça, 10 гектар çинчен 17,5-шер центнер урпа пухса кĕртрĕ.

Колхоз кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçарса ячĕ. Сортлă вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Вырăнти удобренисем пухаççĕ.

Çуртрисем акмалли 84 гектар çине юр тытнă. Кунсăр пуçне, ыраш калчи çине улăмран çыхнă кĕлтесем лартнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем вырăнти Советсен суйлавне çуракине лайăх хатĕрленсе çитнипе паллă тума тăрăшаççĕ.

И. РЕДЬКОВ.

Культура ӳсни

УЛАТĂР. Хулара тата районта библиотекăсен хисепĕ ӳссех пырать. Хулара 26 библиотека, ялсенче 60 библиотека ĕçлет Кĕнекесен хисепĕ çултан-çул ӳссе пырать. Иртнĕ çулта пурĕ 23 пин кĕнеке туяннă. Çапла вара халĕ районти библиотекăсенче пурĕ 70 пин ытла кĕнеке пур. Нумай çынсĕн хăйсен килĕсенче библиотекăсем пур.

М. ЕМШАНОВ.

Тĕнчери лару-тăру

МИРЕН ТАТА ПУЛТАРУЛЛА ĔÇЕН БЮДЖЕЧĔ

1952 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче Румынири пĕтĕм халăх çĕнĕ конституци тăрăх Аслă Наци. пухăвне суйланă. Аслă Наци пухăвĕн пĕрремĕш сессийĕ 1953 çулхи январĕн 24-мĕшĕнче кăçалхи бюджета пăхса тухса çирĕплетнĕ. Халăх демократиллĕ Румынин бюджечĕ Румыни халăхĕ социализм тăвассишĕн пыракан кĕрешӳре тунă чаплă ӳсĕмсене уççăн палăртать. Совет Союзĕ тăванла пулăшса пынипе халăх демократи çĕршывĕсем хăйсен мирлĕ экономикине хăвăрт аталантарса пыраççĕ. Румынин çĕнĕ бюджечĕ халăх демократи çĕршывĕсенче пулса иртекен питĕ пысăк социальнăй-экономикăллă улшăнусене лайăх ăнланса илме пулăшать.

Социализмпа демократи лагерьне кĕрекен çĕршывсем тĕнчери параллеллĕ рынок тунă çĕршывсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине тата пĕрне-пĕри пулăшса пынине хакласа, Сталин юлташ хăйĕн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕнче çакна кăтартса парать: «çавăн пек килĕштерсе ĕçленин никĕсĕ пĕр-пĕрне тӳрĕ кăмăлпа пулăшма тăрăшни тата экономикăра пĕтĕмĕшле ӳсĕм тума тăрăшни пулать. Çакна пула çав çĕршывсенчи промышленность пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пырать. Шанчăклăнах çапла калама пулать: промышленность çавăн пек хăвăрт аталанса пырсан, ĕç часах çакăн пек пулса тăрĕ: çав çĕршывсем капитализмлă çĕршывсенчен тавар илсе тăмасăрах пурăнĕç кăна мар, вĕсем хăйсен производстви туса кăларакан ытлашши таварсене аякка сутса тăма кирлине те туйса илĕç».

Румыни экономики çак анализа лайăх çирĕплетсе çутатса парать. Çĕршыва социализмлă майпа индустриализацилессине пысăк хăвăртлăхсемпе пурнăçласа пыраççĕ. 1938 çулхипе танлаштарсан, Румынире 2,5 хут ытларах хурçă тата электроэнерги туса кăлараççĕ. Цемент туса кăларасси виçĕ хут ӳснĕ. Нефть кăларасси вăрçăчченхи шайран нумай иртсе кайнă. Румыни промышленноçĕ электромоторсем, турбогенераторсем, станоксем, тракторсем, ялхуçалăх машинисем, нефть тата сăрт-тупа электротехника промышленноçĕ валли оборудовани туса кăларать. Вĕсене ĕлĕкрех капитализмлă çĕршывсенчен илсе тăнă. Çакăнпа пĕрлех ялхуçалăхĕ те аталанса пырать.

Халĕ Румыни Халăх Республики пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулне кĕнĕ. Çĕршыври рабочи класс вăл пилĕкçуллăха срокчен—тăватă çулта тултарма тăрăшать. 1952 çулта промышленность производстви 1948 çулхи шайран виçĕ хут иртсе кайнă. Чылай таварсен хакĕсене йӳнетнине пула ĕççыннисен реальнăй ĕç укçи ӳснĕ.

1952 çул пуçламăшĕнче, Румынири Рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕ пуçарнипе, укçа-тенкĕ реформине иртернĕ. Вăл реформа çĕршыври укçа-тенкĕне çирĕплетнĕ. 1952 çулта пурнăçа кĕртнĕ бюджет пекех, 1953 çулхи çĕнĕ бюджет та — дефицитсăр. Çĕнĕ бюджетра тупăшсен пайне расходсенчен пĕр миллиард лей ытларах тума палăртнă. Çавна май çакна палăртмалла: бюджетăн тупăшсен пайĕнче халăхран илекен налог пĕчĕк вырăн кăна йышăнать. Тупăшсем ӳсесси социализмлă накоплени шучĕпе пулса пырать.

1953 çулхи бюджет вăл—Румынин мирлĕ строительствине, çĕршыва малалла индустриализацилемелли тата ĕççыннисен пурнăç условийĕсене аталантармалли бюджет. Çакна каласан та çителĕклĕ: халăх хуçалăхĕ валли иртнĕ çулхинчен 4,3 миллиард лей ытларах расходлама палăртнă. Промышленноçри производство хатĕрĕсене аталантарма, ĕççыннисем валли пурăнмалли çурт-йĕрсем тума, социальнăй-культурăллă ĕçсем валли укçа-тенкĕ нумай уйăрнă. Халăх валли ваккăн сутмалли таварсен хисепне 21 процент ӳстерме палăртнă. Оборона валли бюджетăн 18 процентне уйăрни Румыни государстви мире юратакан политика тытса пынине кăтартса парать.

Румыни экономики — социализм тăвакан, мирпе демократи лагерьне кĕрекен çĕршывăн чечекленсе пыракан экономики. Ыранхи кун çине шанса пăхакан Румыни рабочийĕсемпе хресченĕсем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен тусне — Совет Союзне, мĕнпур халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа чĕререн тав тăваççĕ.

ВАСКАСА ХĔÇПĂШАЛ ХАТĔРЛЕНИ ФРАНЦИЕ КАТАСТРОФА ПАТНЕ ИЛСЕ ПЫРАТЬ

Хĕвеланăç Европăри капитализмлă çĕршывсем США пусмăрне кĕрсе ӳкнĕ. Вĕсем Америка хушнă тăрăх вăрçа хатĕрленмелли политика тытса пыраççĕ. Вăл çĕршывсен экономики мир лагерĕнчи çĕршывсен чечекленсе тата тĕрекленсе пыракан экономикинчен пачах уйрăлса тăрать. Январĕн 27-мĕшĕнче ирхине Франци парламенчĕ ытларахăш сасăпа (коммунистсем 100 сасăпа хирĕç пулнă) 1953 çул валли çĕршывăн вăрçă бюджетне çирĕплетнĕ. Çĕршыва хĕçпăшаллантарас çĕре, Вьетнам халăхне хирĕç туса пыракан вăрçă валли каякан расходсем кăçал калама çук пысăк—пĕр триллион та ултçĕр миллиард франк чухлĕ пулаççĕ. Ку вăл 1952 çулхинчен 200 миллиард франк ытларах пулать.

Прогрессивлă ушкăнсенче палăртнă тăрăх, вăрçă бюджетне тата Францири ĕççыннисен пурнăçне малалла начарлатмалли бюджета Франци валли Америка «советникĕсем» туса хатĕрленĕ. Францири влаçра тăракан реакциллĕ ушкăнсем вĕсен государство кассинче вăрçă тĕллевĕсем валли каякан питĕ пысăк расходсене саплама укçа çуккине, малашне те пулас çуккине лайăх ăнланаççĕ. Влаçра тăракан ушкăнсем вăл расходсене çĕнĕ бюджета кĕртнĕ. Кунта вĕсене США пулăшăвĕ кирлĕ пулать. Анчах Вашингтон вăл пулăшушăн, паллă ĕнтĕ, Франци умне Америка хушнисене пурне те пурнăçлама, сăмахран Хĕвеланăç Германири реваншистсене хĕçпăшаллантарма килĕшме пĕтĕмпех Америкăна пăхăнса тăма требовани лартать. Францири «Либерасьон» хаçат çак кунсенче çапла çырнă: бюджета йышăннă хыççăнах, çар министрĕ Плевен «Европа çарне» тăвасси çинчен тунă договора Наци пухăвĕнче çирĕплеттерме хăтланса пăхĕ. США вăл договора çирĕплетессишĕн хытă тăрăшать. США-н тĕп «сăлтавĕ» — «е договора çирĕплетесси, е пĕтсе ларасси» пулать.

Прогрессивлă хаçат çакăн пек асăрхаттарни Францин экономикăллă лару-тăрăвĕ мĕнле пулнине тĕрĕс кăтартать: Францин хальхи правительствин министрĕсем те çакна йышăнаççĕ: агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокне хутшăнакан çĕршывсем Хĕвеланăç Европăри çĕршывсем—вăл шутра, паллă ĕнтĕ, Франци те—«вăрçă расхочĕсен чи çӳлĕ шайне çитрĕç». Васкаса хĕçпăшал хатĕрлени çар заказĕсем илсе тăракан капиталистсене пуйтарать пулин те çĕршыва вăйсăрлатать, ĕççынни массисене чухăнлăха кĕртсе ӳкерет.

Францири Наци пухăвĕн чи ватă депутачĕсенчен пĕри—Марсель Кашен коммунист Наци пухăвне уçнă чухне çĕршывăн лару-тăрăвĕ çинчен çапла каланă: «Чăнлăх пире çапла калама хушать: эпир политикăллă тата экономикăллă кризис умĕнче тăратпăр, çĕршывра пур çĕрте те çынсем кăмăлсăр пулни палăрать. Рабочисен, пĕчĕк тата вăтам служащисен ĕç укçи çителĕксĕр, капиталистла трестсен тупăшĕсем ӳснĕ май халăх массисем тавар илме пултарасси чаксах пырать».

Францири политикăллă кризис Америка империалисчĕсене пăшăрхантарать тата хăратать. Францири буржуалла партисен чылай пайĕ, халăх тарăхăвĕнчен хăраса, çĕршыва унăн государствăллă никама пăхăнманлăхне пĕтĕмпех пĕтерсе лартмалли мерăсене пурнăçа кĕртме тăхтаса тăнăшăн Америка империалисчĕсем питĕ хытă тарăхаççĕ. Америкăри «Лайф» журналăн январь уйăхĕнчи номерĕнче Францие питех те кӳрентерекен статья пичетлени США-ри влаçра тăракан ушкăнсем хытă тарăхнине лайăх палăртать.

Кӳрентерекен çав статьяра Европăри ватă çĕршывсенчен пĕрне — Францие аскăнчăк хĕрпе танлаштарнă. Франци реакцийĕ, çак статья пичетленсе тухсан, аптраса ӳксе протестленĕ тата тӳрре тухма тăрăшнă. Нацин никама пăхăнманлăхне сутакансемшĕн çак статья хуçа кăшкăрса пăрахнă евĕрлĕ туйăннă. Сылтăм социалистсен органĕ — «Попюлер де Пари» хаçат Америка енчен çавăн пек хĕсни вăл мĕн пурĕ те «шӳт туни» кăна пулать тесе ĕнентерме тăрăшнă.

Наци пухăвĕн реакциллĕ ытларахăшĕ вăрçă бюджетне йышăнни тата «Лайф» хаçатăн намăссăр статьи пирки çавăн пек каланисем çакна уççăн кăтартса параççĕ: Франци буржуазин лидерĕсем халăха улталаççĕ, хăйсене Америкăпа «кăмăлсăр» пулнă çынсем пек кăтартса, халăха лăплантарма тăрăшаççĕ. Вĕсем çапла туса США-ран ĕлĕкхинчен кăшт ытларах долларсем илеççĕ. Тĕрĕссипе илсен, буржуази лидерĕсем Америка требованийĕсем умĕнче капитуляци тумалли çула, урăхла каласан, çĕршыва малалла милитаризацилемелли, Франци экономикине малалла та вăйсăрлатса пымалли çула суйласа илнĕ.

Анчах, паллă ĕнтĕ, Францишĕн тепĕр çул—никама пăхăнмасăр пурăнмалли тата чечекленмелли çул пур. «Пари-пресс-Энтрансижан» хаçат çапла çырать: «Франци каллех чаплă тапхăр патне таврăнма пултарать, вăл чăнниех те çапла. Ăна тăвас тесен, Атлантика е Европа пĕрлешĕвне тăвассишĕн ытлашши тăрăшмалла мар, Шуман планне пăрахăçламалла, Индо-Китайри йывăр лару-тăруран тухмалла, Францин хăйĕн килĕнче хăйĕн хуçа пулмалла».

Францин чăн-чăн патриочĕсем — коммунистсем — Франци халăхне çак çул çине тăма чĕнеççĕ. Правительствăн нумай пулмасть пулнă кризисĕ вăхăтĕнче коммунистсен партийĕ халăха Францире мирпе наци никама пăхăнманлăхĕн политикине тытса пыракан правительство тума чĕннĕччĕ. «Маршалл планне, Атлантика пактне тата ытти агрессиллĕ çар килĕшĕвĕсене тăрă шыв çине кăларса, тенĕ чĕнсе каланинче, çав правительство Америка оккупацине пĕтерсе лартнă пулĕччĕ. Вăл Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас тĕлĕшпе ĕçленĕ пулĕччĕ, Вьетнамри вăрçа чарса лартĕччĕ, пирĕн экономикăна мирлĕ пурнăçшăн ĕçлеттерĕччĕ. Вăл правительство конституциллĕ тата çынсен ирĕклĕхĕсем пуласси пирки шантарса тăрĕччĕ».

Халăха çакăн пек правительство тумалли идейăна Францири Коммунистсен партийĕ сĕннĕ те ĕнтĕ. Коммунистсен партийĕ демократиллĕ ирĕклĕхсемшĕн тата наци никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳ ялавне çĕкленĕ. Коммунистсен партийĕ рабочи класпа нацин чĕрĕ вăйĕсем çине тайăнса ĕçлекен правительство тăвассишĕн пĕрлешме халăха чĕнет.

Б. ЛЕОНТЬЕВ.

Ливанри хаçат И. В. Сталин юлташăн „ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем“ ятлă произведенине пичетлесе кăларнă

БЕЙРУТ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ливанри пысăк хаçатсенчен пĕри — «Телеграф» хаçат — И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенине кĕскетсе араб чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

Болгари халăх хуçалăхĕ 1952 çулта аталанни

СОФИЯ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян хаçатсенче халăх хуçалăхне аталантармалли плана 1952 çулта тултарнин итогĕсем çинчен Болгари Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

1952 çулта промышленность продукцийĕ туса кăлармалли плана 98,9 процент тултарнă.

1952 çулхи промышленность продукцийĕн калăпăшĕ 1951 çулхи промышленность продукцийĕн калăпăшĕнчен 18 процент пысăкрах пулнă.

Болгари промышленноçĕ 1952 çулта 130 тĕслĕ çĕнĕ машинăсемпе механизмсем туса кăларассине йĕркеленĕ.

1952 çулта çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарас тĕлĕшпе те çĕнĕ çитĕнӳсем тунă.

Болгарире капитальнăй строительство пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пырать. 1952 çулта капиталовложенисем 1951 çулхинчен 14 процент ытларах пулнă. Нумай промышленность предприятийĕсем ĕçлеме пуçланă.

Пĕлтернинче çапла каланă: укçа-тенкĕ реформине иртерни, апат-çимĕç продукчĕсене карточка тăрăх парса тăрас йĕркене пĕтерни тата тавар хакĕсене икĕ хутчен йӳнетни лев хакне çирĕплетрĕ, ĕççыннисем илекен реальнăй тупăша ӳстерчĕ, суту-илĕве малалла вăйлатрĕ.

Промышленноçра, строительствăра, транспортра тата суту-илӳре ĕçлекен рабочисемпе служащисен хисепĕ 1952 çулта 47.709 çын ӳснĕ. Промышленноçра ĕç тухăçлăхĕ çулталăк хушшинче 11 процент ӳснĕ.

Статистика Управленийĕ пĕлтернинче халăхăн культурăллă шайне ӳстерес, халăха çутта кăларас тата сывлăха сыхлас енĕпе тунă пысăк çитĕнӳсене палăртнă.

АЛБАНИПЕ ВЕНГРИ КУЛЬТУРА ТĔЛĔШПЕ ПĔР-ПЕРИНПЕ КИЛĔШТЕРСЕ ĔÇЛЕНИ

ТИРАНА, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Албани Халăх Республикин тата Венгри Халăх Республикин представителĕсем Тирана хулинче хăйсен çĕршывĕсем хушшинче наукăпа техника ыйтăвĕсем тăрăх килĕштерсе ĕçлесси çинчен икĕ протокол çине алă пуснă.

ФАШИСТСЕН ФРАНЦИРИ ИРСĔР ĔÇĔСЕМ

ПАРИЖ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите-диманш» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине автомашинăпа пырса çитнĕ фашистсен ушкăнĕ Коммунистсен партийĕн секцийĕн Шато урамĕнчи (Парижри 14-мĕш округ) çуртне алăкне çĕмĕрнĕ. Шала кĕрсе фашистсем кантăксене ватнă, сĕтел-пукансене çĕмĕрнĕ тата хаçатсене вăрласа кайнă.

Демократиллĕ организацисене хирĕç кун пек фашистла провокацисем малашне ан пулччăр тесе, хаçат ĕççыннисене хăйсен сыхăлăхне ӳстерме чĕнет.

ХУЛА ТРАНСПОРТĔНЧИ РАБОЧИСЕН ЗАБАСТОВКИ

РИМ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ырăнти вăхăтпа 12 сехетре мĕнпур Италире хулари транспортпа хула çумĕнчи поселоксенчи электропоездсем çинче ĕçлекен рабочисемпе служащисен 12 сехетлĕх забастовки пуçланнă. Вăл забастовкăна 50 пин çын хутшăнать. Забастовкăна предприяти хуçисемпе ĕç укçине ӳстересси çинчен калаçса татăлайман пирки профсоюз организацийĕсем пуçланă.

Муниципалитет аллинче тăракан хула транспорчĕн администрацийĕ ĕççыннисен требованийĕсене тивĕçтерме килĕшнĕ, анчах уйрăм çынсен аллинче тăракан компанисен представителĕсем пачах урăхла позици йышăннă. Забастовка çавăнпа пуçланнă та ĕнтĕ.

Римра хулари пĕтĕм транспорт çӳреме чарăннă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх доброволецĕсен чаçĕсем мĕнпур фронтсенче Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç артиллерирен персе тăнă.

Ĕнер çĕрле Америка бомбардировщикĕсем Пхеньян çумĕнчи поселоксем çине, унта нимĕнле çар объекчĕсем çук пулин те, тискеррĕн пырса тапăнса бомбăсем пăрахнă. Мирлĕ çынсене нумай вĕлернĕ тата амантнă, вуншар пурăнмалли çурт-йĕрсемпе землянкăсене ишĕлтернĕ.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн пĕр самолетне персе ӳкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ февралĕн 1-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн тата Китай халăх доброволецĕсен соединенийĕсем мĕнпур фронтсенче Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç артиллерирен персе тăнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ПХЕНЬЯН ÇИНЕ ТИСКЕРРĔН ТАПĂНАТЬ

ПХЕНЬЯН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Пхеньян çине тата Çурçĕр Корейăри ытти ялсемпе хуласем çине тискеррĕн тапăнма чарăнмасть. Ĕнер çĕрле Америка самолечĕсем Пхеньян сывăхĕнчи поселоксем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахнă.

Чжанчхонри ялĕнче, унта нимĕнле çар объекчĕсем çук пулин те, 60 хĕрарăма тата ачана вĕлернĕ, 40 çынна ытла амантнă. 200 хресчен çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă.

Италири ĕççыннисем хăйсен прависемшĕн кĕрешеççĕ

РИМ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Мĕнпур çĕршыври ĕççыннисем правительствăн суйлав системин демократие хирĕçле «реформин» закон проектне хирĕç тата предприяти хуçисем политикăллă забастовкăсене пусарма хăтланнине хирĕç протестлеççĕ.

Миланри «Даль-Орто» типографи хуçи рабочисене — забастовкăна хутшăннă çынсене штрафланине хирĕç тата профсоюзăн вырăнти комиссийĕн председательне ĕçрен кăларса яма йышăннине хирĕç протестлесе, типографинче ĕçлекенсем забастовка иртернĕ. Çавăн хыççăн типографи хуçи хăйĕн предприятине хупнă.

Закон проектне хирĕç протестлесе иртернĕ демонстрацисем çавăн пекех Масса-Ломбардара (Равенна провинцийĕ) тата Карбоннăра (Кальяри провинцийĕ) пулнă.

Англи империализмĕн Центральнăй Африкăри планĕсем

ЛОНДОН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Центральнăй Африкăн федерацине тăвас тĕлĕшпе Лондонра иртнĕ конференци январĕн 29-мĕшĕнче хăйĕн ĕçне вĕçленĕ.

Англи министрĕсем Çурçĕр Родезири, Кăнтăр Родезири тата Ньясалендри колониллĕ влаçсен представителĕсемпе пĕрле Центральнăй Африкăн федерацине тумалли плана пĕр уйăх хушши сӳтсе явнă. Вăл федерацине Англин виçĕ колонийĕ—Çурçĕр Родези, Кăнтăр Родези тата Ньясаленд кĕмелле. Паллă ĕнтĕ, çак çĕршывсенчи халăхăн ытларахăшĕ пулса тăракан негр халăхĕн представителĕсене конференци ĕçне хутшăнтарман. Негр представителĕсем Англин Центральнăй Африкăри империалистла планĕсене хирĕç пĕр хутчен кăна мар хытă протестленĕ.

Федерацине тăвассин тĕллевĕ пĕр енчен, Африкăна Америка капиталĕ нумайрах пырса кĕнĕ пирки Англин Африкăри позицийĕсене тĕреклетесси, тепĕр енчен, негр халăхне эксплуатацилесси тата наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕве сарăлма чарасси пулать. Федераци проекчĕн авторĕсем çак тĕллеве Çурçĕр Родезипе Ньясалендра расистла режим сарнипе пурнăçлама шутлаççĕ. Ун пек режима, Кăнтăр Африка Союзĕнчен пример илсе, Кăнтăр Родезире тунă ĕнтĕ.

Конференци решенийĕсене каярахпа пичетлесе кăлараççĕ пулсан та, федераци мĕнле пуласси Кăнтăр Родезин премьер-министрĕ Хаггинс Лондонри пресс-конференцире туса калани лайăх кăтартса парать. Пичет представителĕсем: федераци çинчен тăракан ыйту тăрăх иртterекен «рефефендума» миçе çын хутшăнма пултарассĕ? — тесе ыйтсан, Хаггинс сĕмсĕррĕн çапла ответ панă: Кăнтăр Родезири 2 миллион негртан «рефферендума» пурĕ те 400 çын кăна хутшăнать. «Европеецсем кăна влаçа пурнăçласа пыма пултараççĕ. Негрсем ăна тума пултараймаççĕ», — тенĕ Хаггинс.

Англире промышленность производстви чакать

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Англи экономикăра йывăрлăхсем тӳсни 1952 çулта промышленность продукцийĕ туса кăларасси чакнинче палăрнă. Центральнăй Статистика бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешнĕ Королевствăра промышленность производствин 1952 çулхи шайĕ 1951 çулхинчен виçĕ процент пĕчĕкрех пулнă.

Англире производство чакнин сăлтавĕсенчен пĕри вăл хурçă çитменнине пула промышленноçăн карапсем тăвакан тата моторсем тăвакан отрасльсенче йывăрлăхсем тухса тăни пулать. Хурçă çитменнине пула çĕнĕ промышленность предприятийĕсем тăвасси чакнă, нумай йышши чĕртавар çителĕксĕр пулнă пирки промышленноçăн ытти отраслĕсенче те ĕçсем япăх пыраççĕ.

Англири рабочи класăн пурнăç условийĕсем начарланнине пула, халăхсем куллен кирлĕ таварсене нумай туянаймаççĕ. Таварсем илесси чакни пуринчен ытла пир-авăр тата çĕвĕ çĕлекен промышленноçра палăрать.

«Файненшл таймс» хаçат, Центральнăй Статистика бюровĕ пĕлтерни çинчен аванса çапла çырать: таварсем сутасси чакнине пула 1953 çулта Англин тата пысăкрах йывăрлăхсем тӳссе иртермелле пулать.

США-па Англи хăйсен çарĕсене Ливире тытса тăма шутлаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ, шанчăклă çынсенчен илнĕ сведенисем тесе, Триполирен пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англие нумай вăхăтлăха Ливи территорийĕ çинче сывлăш-çар базисемпе гарнизонсем тытса тăма ирĕк паракан çĕнĕ килĕшӳсем туса çитереççĕ. Килĕшӳре мĕн çырнине пĕлтермеççĕ. Анчах çакă паллă пулнă: хăшпĕр килĕшӳсем Пĕрлешӳллĕ Штатсене Уилус Филдра сывлăш-çар базисем, Англие—Триполитанире тата Киренаикăра çарсемпе сывлăш-çар базисем тытса тăма ирĕк параççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче

БУХАРЕСТ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕн пиллĕкмĕш вăййине иртернĕ. Совет шахматисчĕ Спасский 40 хут çӳренĕ хыççăн Рэдулескуна (Румыни) çĕнтернĕ.

Сливапа (Польша) Толуш (СССР) хушшинчи партире шахматистсем пурĕ те 16 хутчен кăна çӳренĕ. Тĕлпулу совет шахматисчĕ çĕнтернипе вĕçленнĕ.

Смысловпа Петросян хушшинчи парти те 21 хут çӳренĕ хыççăн пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Болеславскипе (СССР) Барца (Венгри) хушшинчи партие тепĕр вăхăта хăварнă.

Чоколтя (Румыни) лайăх выляннă. Вăл Милева (Болгари) çĕнтернĕ. Голомбек (Англи) Шайтартан (Чехословаки) выляса илнĕ.

Филипп (Чехословаки) Рейхера (Румыни) çĕнтернĕ.

Бардапа (Норвеги) Штольц (Швеци) хушшинчи парти 17 хут çӳренĕ хыççăн пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Л. Сабопа (Венгри) Трояннеску (Румыни) хушшинчи тата О'Келлипе (Бельги) Ш. Сабо (Румыни) хушшинчи партисене тепĕр вăхăта хăварнă.

БУХАРЕСТ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче тепĕр вăхăта хăварнă партисене выляса пĕтернĕ.

Совет гроссмейстерĕ Болеславскипе Швеци мастерĕ Штольц хушшинчи парти Болеславский çĕнтернипе вĕçленнĕ. Барцана (Венгри) хирĕç выляннă партире Болеславский, выляма тытăнмасăрах, пĕрне-пĕри çĕнтереймен тесе шутлама килĕшнĕ. Çавăн пекех Болеславскипе Ш. Сабо (Румыни) хушшинчи тепĕр вăхăта хăварнă парти те пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. Венгри гроссмейстерĕ Л. Сабо Трояннескуран (Румыни) выляса илнĕ.

О'Келли (Бельги) Румыни шахматисчĕсемпе — Трояннескупа тата Ш. Сабопа выляннă партисем пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Голомбек (Англи) Рэдулескуран (Румыни) выляса илнĕ.

Барцапа (Венгри) Слива (Польша) хушшинчи партие, Слива чирлĕ пулнă пирки, выляса пĕтермен.

Февралĕн 3-мĕшĕнче улттăмĕш вăйă пулать.

СССР чемпионĕн ятне илессишĕн

Шахмат енĕпе СССР чемпионĕ ятне илессишĕн Ботвинникпа Тайманов хушшинче пыракан ăмăртура январĕн 31-мĕшĕнче тăваттăмĕш партие выляннă.

42 хут çӳренĕ хыççăн партие тепĕр вăхăта хăварнă.

Малалла выляни усăсăр пулнине пĕлсе, Тайманов гроссмейстер февралĕн 1-мĕшĕнче, выляма пуçламасăрах, çак партире хăйне çĕнтернĕ тесе йышăннă.

Çапла майпа тăватă тĕлпулу хыççăн Ботвинник гроссмейстер 3 очко, Тайманов гроссмейстер 1 очко пухнă.

(ТАСС).

Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнаççĕ

(Республика тулашĕнчен килнĕ çыру)

Калининград облаçĕнчи Полесски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоза 1946 çулта организациленĕ. Унта, ытти халăх çыннисемпе пĕрлех, Чăваш республикинчен куçса килнĕ колхозниксем те нумай. Çĕмĕрле районĕнчен куçса килнĕ К. Николаев, Канаш районĕнчи Çăлпуç ялĕнчен П. Макаров, Вăрмар районĕнчен А. Иванов, Л. Михайлов, Шăхасан, Октябрьски районĕсенчен куçса килнĕ чылай колхозниксен çемйисем ĕçлеççĕ.

Юлашки çулсенче эпир колхозри ĕçе ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче кăтартнă пек йĕркелерĕмĕр. Ĕçре çирĕп дисциплина турăмăр. Ялхуçалăх ĕçĕсене агротехника кăтартăвĕсене çирĕп пурнăçласа туса пытăмăр. Çавна пула иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илтĕмĕр. Малтанхи çулсемпе танлаштарсан, пирĕн тырпул тухăçлăхĕ 150—242 процент ӳсрĕ.

Колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата тупăш илмелли плана та ăнăçлăн тултарчĕ. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăна срокчен тата иртерсе тултарнă хыççăн, эпир ытлашши çимĕçсене колхоз пасарĕнче сутрăмăр. Çапла вара, сĕт 27.311 тенкĕлĕх, çăмарта 19.970 тенкĕлĕх, сысна çурисем 56.730 тенкĕлĕх, ĕне выльăх 37.377 тенкĕлĕх, аш-какай 28.156 тенкĕлĕх сутрăмăр. Сысна ĕрчетсе кăна эпир пурĕ 280 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр.

Çак укçа пĕтĕмпех колхозăн обществăллă хуçалăхне вăйлатма, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пама кайрĕ. Чăваш республикинче пурăннă чухне эпир çакна асăрханă: хăшпĕр колхозсем выльăх апатне перекетлетпĕр тесе, ытлашши сысна çурисене çамрăклах сутса пĕтереççĕ. Çакă питех те тĕрĕс маррине эпир кунта аван куртăмăр. Эпир 100 килограмм таякан тумасăр пĕр сысна та сутмастпăр. Çапла тусассăн, сыснана çитернĕ, пăхнă тăкаксене шутласан та, колхоз 2—3 хут ытларах тупăш илет.

Тырпул тухăçлăхĕ, выльăх-чĕрлĕх тупăшĕ ӳснĕ май, колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх илекен тупăш та чылай ӳсрĕ. Путексем пăхакан М. Захарова колхозница 700 ĕçкунĕ туса 130 пăт тĕштырă, 1.400 тенкĕ укçа, К. Николаев юлташ çемйи 187 пăт тĕштырă, 2.000 тенкĕ укçа илчĕç. Çавăн пек колхозниксем кунта йĕркерех.

Халĕ колхоза пилĕк çул хушшинче аталантармалли плана тума тытăнтăмăр. Эпир тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕхрен тупăш илмелли плана партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăсене шута илсе тăватпăр. Кăçал кашни гектартан тĕштырă вăтам шутпа 20—25 центнер, кашни сăвакан ĕнерен 2.000 литр сĕт суса илетпĕр.

Эпир хамăр колхоза тĕреклетсе пырассишĕн куллен тăрăшса ĕçлетпĕр.

М. ДМИТРИЕВ.

Хоккей вăййипе мала тухассишĕн

Февралĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарти «Молния» спорт обществи каткĕнче хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн икĕ вăйă пулчĕ.

Чи малтанах Шупашкарти динамовецсем Етĕрнери «Искра» спорт обществи командипе тĕл пулса вылярĕç. Вăйă 7 : 0 шутпа «Динамо» команди çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Чапаевски поселок командипе Çĕмĕрлери «Урожай» спорт обществи командисем хушшинчи вăйă хĕрӳллĕ пулчĕ. Çĕмĕрлесем 4 : 0 шутпа выляса илчĕç.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

«РОДИНА» КИНОТЕАТРТА
Паян, февралĕн 3-мĕшĕнче,
тата малашнехи кунсенче те
фильм-спектакль
«ВОЛКИ и ОВЦЫ»
16 тата 20 сехетре пуçланакан сеанссенче пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче иккĕмĕш сери кăтартаççĕ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, февралĕн 3-мĕшĕнче,
тата
Ыран, февралĕн 4-мĕшĕнче,
вырăсла спектакль
«НЕВОЛЬНИЦЫ»
ЧАСАХ! — чăвашла спектакль
«НАРСПИ»
Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01279 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.